# ТУРĂ СĂВАПЛĂ
# ИОАНН ТУРСĂМАХÇĂНА
# МАЛАШНЕХИНЕ УÇСА ПАНИ
# (АПОКАЛИПСИС)

## 1-мĕш сыпăк

*Çак кĕнеке çинчен*

[1] Малашлăхра часах мĕн пулассине Хăйĕн чурисене кăтартас
тесе, Турă Иисус Христоса малашнехине уçса панă. Çăвна Вăл Хă-
йĕн ангелĕ урлă Хăйĕн чурине Иоана кăтартнă. [2] Иоанн вара Турă
Сăмахĕ çинчен, Иисус Христос çирĕплетсе калани çинчен тата
хăй мĕн-мĕн курни-илтни çинчен каласа пĕлтернĕ. [3] Çак пророк-
ла сăмахсене вулакан, вĕсене итлекенсем тата унта мĕн çырнине
тытса пурăнакансем телейлĕ, мĕншĕн тесен вăхăт çывăх ĕнтĕ.

*Çичĕ чиркĕве салам яни*

[4-5] Асири çичĕ чиркĕве – Иоанран: сире Пурринчен, Пулнин-
чен, Пулассинчен, Унăн престолĕ умĕнчи çичĕ сывлăшран тата
Иисус Христосран ырăлăхпа канăçлăх пултăр. Иисус çирĕплетсе
пĕлтерни чăн. Вăл – вилнисенчен чи малтан чĕрĕлсе тăнăскер, çĕр
çинчи патшасемпе хуçаланаканскер. Вăл пире юратнăран Хăйĕн
Юнĕпе пирĕн çылăхсенчен хăтарнă, [6] Хăйĕн Ашшĕ, Туррăмăр,
умĕнче пире патшалла священниксем тунă. Вăл ĕмĕр-ĕмĕрех мух-
тавлă та хăватлă пултăр! Аминь. [7] Акă, Вăл пĕлĕтсем çинче килĕ те,
Ăна пурте, çав шутрах Хăйне пăталаса сăнăпа чикнисем те, курĕç.
Çĕр çинчи мĕн пур йăхсем Унăн умĕнче татăлса йĕрĕç. Çапла пулĕ,

аминь. 8 «Эпӗ – Альфа тата Омега*, пуҫламӑшӗ тата вӗҫӗ, – тет
Хуҫамӑр. – Эпӗ – Пурри те, Пулни те, Пуласси те, Пурне те
тытса тӑракан».

*Христос курӑнни*

9 Эпӗ, Иоанн тӑванӑр, Иисус Христосӑн патшалӑхне кӗрес
тесе, Вӑл тӳснӗ пек асапа сирӗнпе пӗрле тӳсетӗп. Мана Турӑ Сӑ-
махне вӗрентнӗшӗн, Иисус Христос ҫинчен ҫирӗплетсе пӗлтер-
нӗшӗн Патмос утравӗ ҫине ячӗҫ. 10 Пӗррехинче, вырсарни кун,
Святой Сывлӑш витӗмӗпе эпӗ хам хыҫӑмра труба сасси пек хӑ-
ватлӑ сасӑ илтрӗм. «Эпӗ – Альфа тата Омега, Малтанхи тата
Кайранхи**, – терӗ ҫав сасӑ. 11 – Хӑвна мӗн курӑннине йӑлтах
кӗнекелесе ҫыр та Асири чиркӳсене: Ефеса та, Смирнӑна та,
Пергама та, Фиатирӑна та, Сардиса та, Филадельфине те, Лао-
дикине те яр». 12 Хампа калаҫаканни кам сасси-ши тесе, эпӗ хы-
ҫалалла ҫаврӑнса пӑхрӑм. Вара, ҫаврӑнса пӑхсан, ҫичӗ ылтӑн
ҫутаткӑҫ куртӑм. 13 Ҫутаткӑҫсем хушшинче Этем Ывӑлӗ евӗрлӗс-
кер тӑратчӗ. Хӑй вӑрӑм тум тӑхӑннӑ, кӑкӑр урлӑ ылтӑн хӑю ҫых-
нӑ. 14 Пуҫӗ те, ҫӳҫӗ те Унӑн шурӑ ҫӑм пек, юр пек шап-шурӑччӗ,
куҫӗсем вут ҫулӑмӗ евӗрччӗ. 15 Урисем Унӑн шӑранса тӑракан пӑ-
хӑр пекчӗ, сасси шыв кӗрлени пекчӗ. 16 Сылтӑм аллине Вӑл ҫичӗ
ҫӑлтӑр тытнӑччӗ, ҫӑварӗнчен ик енӗ те ҫивӗч хӗҫ тухса тӑратчӗ,
сӑнӗ-пичӗ вара Унӑн хӗртсе пӑхакан хӗвелччӗ.

17 Ӑна курсассӑнах эпӗ Унӑн ури умне вилнӗ пек ӳкрӗм. Вара
Вӑл ман ҫине сылтӑм аллине хурса ҫапла каларӗ: «Ан хӑра. Эпӗ –
Малтанхи те, Кайранхи те. 18 Эпӗ – чӗрӗ. Эпӗ вилнӗччӗ, акӑ,
курсам: Эпӗ ӗмӗр-ӗмӗрех пурӑнатӑп, аминь. Тамӑкпа вилӗм ҫӑ-
раҫҫисем те Манра. 19 Ӗнтӗ ху мӗн курнине, мӗн пуррине тата
ҫакӑн хыҫҫӑн мӗн пулассине ҫырса хур. 20 Эсӗ Манӑн аллӑмра
курнӑ ҫичӗ ҫӑлтӑр тата ҫичӗ ҫутаткӑҫ акӑ мӗне пӗлтереҫҫӗ: ҫичӗ
ҫӑлтӑр вӑл – ҫичӗ чиркӗвӗн ангелӗсем, эсӗ курнӑ ҫичӗ ҫутаткӑҫ
вара – ҫичӗ чиркӳ».

---

* 1:8 *Альфа тата Омега* – грек алфавитӗнчи малтанхи тата юлашки сас паллисен ячӗсем.

** 1:10 Хӑш-пӗр авалхи ал ҫырусенче «*Эпӗ – Альфа тата Омега, Малтанхи тата Кайранхи*» сӑмахсем ҫук.

## 2-мĕш сыпăк

*Ефесри чиркĕве янă çыру*

1 «Ефес чиркĕвĕн ангелне çырса яр: „Хăйĕн сылтăм аллинче
çичĕ çăлтăр Тытса тăракан, çичĕ ылтăн çутаткăç хушшинче Çӳ-
рекен çапла калать, те: 2 Санăн ĕçӳсене те, тăрăшулăхна та, чă-
тăмлăхна та пĕлетĕп. Эсĕ пăсăк çынсене тӳсме пултарайманни-
не те пĕлетĕп. Апостол мар çинчех хăйсене апостол текенсене
эсĕ тĕрĕслесе пăхнă та вĕсем суеçĕсем кăна пулнине тупса па-
лăртнă. 3 Сана нумай тӳсме лекет, эсĕ чăтăмлă, Манăн ятăмшăн
ывăна пĕлми ĕçлетĕн. 4 Анчах та Манăн сана асăрхаттарса кала-
малли те пур: санра халĕ малтанхи юратулăху çук. 5 Çапла вара,
ху еплерех чун çӳллĕшĕнчен ӳкнине аса ил те ӳкĕн, малтанхил-
лех ĕçлесе пурăн. Апла тумасан, часах сан патна пырăп, çутат-
кăçна вырăнĕнчен хускатăп. 6 Çапах та николаитсен* ĕçне-хĕл-
не эсĕ Манашкалах курайманнишĕн сана ырламалла. 7 Сывлăш
чиркӳсене мĕн каланине илтме хăлха пурри илттĕр. Çĕнтереке-
не Эпĕ Туррăн райĕ варринчи пурăнăç йывăççин çимĕçне çиме
ирĕк парăп“».

*Смирнăри чиркĕве янă çыру*

8 «Смирна чиркĕвĕн ангелне те çырса яр: „Малтанхи тата Кай-
ранхи, Вилнĕскер, акă, Чĕрĕскер, çапла калать, те: 9 Санăн ĕçӳ-
сене, хуйху-суйхуна та, чухăнлăхна та (тĕрĕссипе, эсĕ – пуян)
пĕлетĕп. Хăйсене иудей текенсем сан пирки усал калаçаççĕ. Вĕ-
сем иудейсем мар – шуйттан пухăвĕ. 10 Хăвна тӳсме лекессинчен
нимĕнрен те ан хăра. Акă, сире тĕрĕслесе пăхас тесе, сирĕнтен
хăшне-пĕрне шуйттан тĕрмене хуптарĕ, унта эсир пĕр вунă кун
тертленĕр. Вилмелле пулсан та, ĕненӳпех вил, вара Эпĕ сана пу-
рăнăç пуç кăшăлне тăхăнтартăп. 11 Сывлăш чиркӳсене мĕн кала-
нине илтме хăлха пурри илттĕр. Çĕнтерекене иккĕмĕш вилĕм сă-
тăр тăваймĕ“».

---

* 2:6 *Николаитсем* – малтанхи христиансем хушшинчи тĕн тĕлĕшĕнчен уйă-
рăлса кайнă ушкăн.

*Пергамри чиркĕве янă çыру*

12 «Пергам чиркĕвĕн ангелне те çырса яр: „Икĕ енĕ те çивĕч
Хĕçли çапла калать, те: 13 Санăн ĕçӳсене, эсĕ шуйттанăн престо-
лĕ ларнă вырăнта пурăннине пĕлетĕп. Сирĕн патăрта, шуйттан
пурăнакан çĕрте, Ман çинчен пĕлтерекен шанчăклă Антипăна
вĕлерчĕç. Эсĕ çав вăхăтра та Ман ятăма тытса пынине, Мана
ĕненме пăрахманнине пĕлетĕп. 14 Анчах та Манăн сана кăштах
асăрхаттарса каламалли те пур: унта, сан патăнта, хăшĕ-пĕри-
сем Валаам вĕрентĕвне тытса пыраççĕ. Çавскер Валака Израиль
çыннисене илĕртсе улталама вĕрентрĕ, çавăнпа вĕсем чӳк çи-
мĕçне çиеççĕ, аскăнланса пурăнаççĕ. 15 Сан патăнта тата никола-
итсен вĕрентĕвне тытса пыракансем те пур, Эпĕ вĕсен вĕрентĕв-
не кураймастăп. 16 Ӳкĕн! Апла тумасан, часах сан патна пырăп,
çав çынсемпе чĕлхе-çăварăм хĕçĕпе çапăçăп. 17 Сывлăш чиркӳсе-
не мĕн каланине илтме хăлха пурри илттĕр. Çĕнтерекене Эпĕ ку-
рăнми маннă çиме ирĕк парăп, шурă чул парнелĕп. Çав чул çине
илекеннисĕр пуçне урăх никам та пĕлмен çĕнĕ ят çырса хунă“».

*Фиатирăри чиркĕве янă çыру*

18 «Фиатира чиркĕвĕн ангелне те çырса яр: „Вут çулăмĕ евĕр
куçлă, шăранакан пăхăр пек ураллă Турă Ывăлĕ çапла калать, те:
19 Санăн ĕçӳсене те, юратулăхна та, Турăшăн ĕçленине те, ĕне-
нĕвне те, чăтăмлăхна та пĕлетĕп. Тата хальхи ĕçӳсем малтанхин-
чен пысăкрах пулнине те пĕлетĕп. 20 Анчах та Манăн сана кăш-
тах асăрхаттарса каламалли пур: эсĕ хăйне пророк теекен хĕрарă-
ма, Иезавеле, чармастăн. Вăл вара Манăн чурамсене аскăнланса
пурăнма, чӳк çимĕçĕ çиме улталаса вĕрентет. 21 Эпĕ ăна пăсăк
ĕçĕсенчен ӳкĕнмешкĕн вăхăт парсаттăм, анчах та вăл ӳкĕнмерĕ.
22 Акă, Эпĕ ăна çавăншăн вырăнпах выртмалла тăвăп. Унпа пĕрле
çылăха кĕрсе пурăннисем çине вара, хăйсен ĕçĕсемшĕн ӳкĕнме-
сен, пысăк хуйхă ярăп. 23 Эпĕ ун хыççăн каякансем çине вилĕм
ярăп, вара Эпĕ çынсен шухăш-туйăмне Тĕрĕслекенĕ пулнине
пур чиркӳсем те ăнланĕç. Эпĕ сире кашнинех ĕçĕрсене кура та-
вăрса парăп. 24 Эсир Фиатирăра пурăнакан ытти хăш-пĕр çын-
семпе пĕрле çав вĕрентӳ хыççăн каймастăр, „шуйттанлăхăн шыр-
ланĕ“ текенни мĕнне пĕлместĕр. Çавăнпа та сире пурне те çакна
калатăп: „Эпĕ сирĕн çине урăх çĕклем хумăп“. 25 Эпĕ пыриччен

вара эсир халиччен мĕне тытса пынă, çавнах тытса пурăнăр.
26-27 Çĕнтерекене, Манăн ĕçĕмсене вĕçне çитичченех туса пыракана, Эпĕ Хамăн Аттемрен урăх халăхсемпе хуçаланма епле ирĕк илнĕ, çапла ирĕк парăп. Вăл вара çав халăхсене тимĕр туяпа пăхăнтарĕ, вĕсем тăм савăт-сапа пек ванса пĕтĕç.
28 Çĕнтерекене тата шурăмпуç çăлтăрĕ парăп.
29 Сывлăш чиркӳсене мĕн калани-не илтме хăлха пурри илттĕр“».

## 3-мĕш сыпăк

*Сардисри чиркĕве янă çыру*

1 «Сардис чиркĕвĕн ангелне те çырса яр: Туррăн çичĕ сывлăшĕпе çичĕ çăлтăр Пурри çапла калать, те: „Санăн ĕçӳсене пĕлетĕп. Ĕненекен ушкăн ятлă пулин те, санăн чиркĕвӳ чĕрĕ мар, вилĕ.
2 Сыхă пул, пĕтес патне çитнине те пулин упраса хăвар. Санăн ĕçӳсем Туррăм умĕнче тивĕççĕррине Эпĕ куратăп.
3 Эппин хăвна мĕн вĕрентнине, мĕн каланине аса ил те, çавсене пăхăнса, ӳкĕн. Эсĕ сыхă тăмасассăн, Эпĕ сан патна, вăрă пек, кĕтмен вăхăтра пырăп, хăш самантра пырасса эсĕ сисеймĕн те.
4 Çапах та санăн патăнта, Сардисра, хăйсен таса тумне вараламан темиçе çын пур. Вĕсем Манпа пĕрле шурă тумтирпе çӳреме тивĕç пулĕç.
5 Çĕнтерекен шурă тумтир тăхăнĕ. Эпĕ унăн ятне пурăнăç кĕнекинчен чĕрсе пăрахмăп, çав ят çинчен Аттемпе Унăн ангелĕсене каласа пĕлтерĕп.
6 Сывлăш чиркӳсене мĕн каланине илтме хăлха пурри илттĕр“».

*Филадельфири чиркĕве янă çыру*

7 «Филадельфи чиркĕвĕн ангелне те çырса яр: Давид патша çăраççиийĕ Унра, Вăл уçнине никам та хупаймĕ, Вăл хупнине никам та уçаймĕ. Çавă – Сăвапли, Чăнни – çапла калать, те:
8 „Эпĕ санăн ĕçӳсене пĕлетĕп. Акă, Эпĕ санăн умăнти алăка уçрăм, ăна никам та хупаймĕ. Çирĕп вăй-халлă мар пулин те, эсĕ Манăн сăмахăма упраса хăварайрăн, Ман ятăмран тунмарăн.
9 Акă ĕнтĕ, Эпĕ хайхи шуйттан пухăвĕнчи çынсене, чунĕпе иудей мар çинчех хăйсене иудей текен суеçĕсене, санăн уру умне ӳксе пуççапмалла тăвăп. Вара вĕсем Эпĕ сана юратнине пĕлĕç.
10 Çĕр çинчи çынсене илĕртсе улталамашкăн пĕтĕм тĕнчене йывăр тĕрĕслев пулĕ. Эпĕ сана чăтăмлă пулма хушнине эсĕ упраса хăвартăн,

çавăнпа йывăр тĕрĕслев вăхăтĕнче Эпĕ те сана упраса хăварăп.
11 Акă, Эпĕ часах пырăп. Çĕнтерекенĕн пуç кăшăлне хывса ан
илччĕр тесен, эсĕ мĕн пуррине çирĕп тытса пыр. 12 Çĕнтерекене
Эпĕ Туррăмăн Çуртĕнче тĕреклĕх юпи тăвăп, вăл Турă Çуртĕнчех
юлĕ. Ун çине Эпĕ Туррăм ятне, çӳл тӳперен, Туррăм патĕнчен
анакан Туррăм хулин – çĕнĕ Иерусалимăн – ятне тата Хамăн çĕ-
нĕ ятăма çырса хурăп. 13 Сывлăш чиркӳсене мĕн каланине илтме
хăлха пурри илттĕр“».

*Лаодикири чиркĕве янă çыру*

14 «Лаодики чиркĕвĕн ангелне те çырса яр: шанчăклă та чăн
çирĕплетсе калакан Аминь, Турă пултарнин пуçламăшĕ, çапла
калать, те: 15 „Санăн ĕçӳсене пĕлетĕп. Эсĕ сивĕ те мар, вĕри те
мар. Ах, эсĕ сивĕ е вĕри пулинччĕ! 16 Анчах та эсĕ сивĕ те мар,
вĕри те мар, лĕп пулнăран Эпĕ сана Хамăн чĕлхе-çăварăмран кă-
ларса пăрахăп. 17 „Çитменни ман нимĕн те çук, эпĕ пуйрăм, эпĕ
пуян,“– тетĕн эсĕ. Ху вара телейсĕр те мĕскĕн, кĕлмĕç, суккăр,
çаппа-çарамас пулнине те пĕлместĕн. 18 Эпĕ сана акă мĕнле ка-
наш паратăп: пуяс тетĕн пулсан Манран вутпа тасалнă ылтăн
туян. Хăвăн намăсна, çарамаслăхна пытармашкăн вара Манран
шурă тумтир туянса тăхăн. Куçна вара, куракан пултăр тесе,
куç эмелĕ сĕр. 19 Эпĕ кама юрататăп, çавна питлетĕп, айăплатăп.
Çавăнпа чунна çунтар, ӳкĕн. 20 Акă, Эпĕ алăк умĕнче шаккаса
тăратăп. Кам Манăн сассăма илтсе алăкне уçĕ, Эпĕ ун патне кĕ-
рĕп те унпа пĕрле тăванлăх апачĕ çийĕп, Манпа пĕрле вăл та
çийĕ. 21 Çĕнтерекене Эпĕ Хампа пĕрле престолăм çине ларма ирĕк
парăп. Эпĕ Хам та, çавнашкалах çĕнтерсе, Аттемпе пĕрле Унăн
престолĕ çине лартăм. 22 Сывлăш чиркӳсене мĕн каланине илтме
хăлха пурри илттĕр“».

## 4-мĕш сыпăк

*Иоана тӳпери курăнни*

1 Унтан эпĕ пăхрăм та, акă, тӳпенелле уçăлнă алăк куртăм. Ва-
ра хампа маларах калаçнă труба сасси пек сасă каллех манпа ка-
лаçа пуçларĕ. «Кунта хăпар, эпĕ сана малашне мĕн пулассине
кăтартăп», – терĕ вăл. 2 Çав самантрах Святой Сывлăш витĕмĕпе
курăну пулчĕ. Акă, тӳпери престол курăнчĕ, престол çинче вара

Лараканĕ пур. 3 Лараканĕ ясписпа сардис текен хаклă йышши
чулсем евĕр йăлтăртатать, престол тавра изумруд пек асамат кĕ-
перĕ. 4 Престол йĕри-тавра тата тепĕр çирĕм тăватă престол, вĕ-
сем çинче çирĕм тăватă ватă ларать. Хăйсем шап-шурă тумтир
тăхăннă, пуçĕсем çинче – ылтăн пуç кăшăлĕсем. 5 Престолран çи-
çĕм çиçсе тухать, аслати сасси, кĕрлев илтĕнсе тăрать. Престол
умĕнче вутлăн çунакан çичĕ çутаткăç – Туррăн çичĕ сывлăшĕ.

6 Престол умĕнче вара витĕр курăнакан пăр пек кĕленче тинĕс.
Тата престол умĕнче те, йĕри-тавра та тăватă чĕр чун, куçĕсем
хăйсен малта та, кайра та темĕн чухлĕ. 7 Пĕр чĕр чунĕ арăслан
евĕрлĕ, тепри вăкăр евĕрлĕ, виççĕмĕшĕ этем сăнлĕ, тăваттăмĕшĕ
вĕçекен ăмăрт кайăк евĕрлĕ. 8 Тăватă чĕр чунĕн те кĕлетки тав-
ра ултшар çунат, çунат айĕсем куçлă-куçлă. Тăватă чĕр чунĕ те
кунĕн-çĕрĕн татти-сыпписĕр çапла кăшкăрса хыттăн мухтаççĕ:
«Пурне те тытса тăракан Хуçа Турă, Пулни, Пурри, Пуласси –
Святой, Святой, Святой!» 9 Çав чĕр чунсем престол çинче Ла-
ракана, ĕмĕр-ĕмĕрех Пурăнакана мухтанă, чысланă, тав тунă
чухне 10 çирĕм тăватă ватă хайхи Ларакан умне, ĕмĕр-ĕмĕрех
Пурăнакан умне ӳке-ӳке пуççапаççĕ. Вĕсем хăйсен пуç кăшăлĕ-
сене престол умне хурса çапла калаççĕ: 11 «Хуçа Туррăмăр, Эсĕ
мухтав та, чыс та, вăй-хăват та илме тивĕçлĕ, мĕншĕн тесен
пурне те Эсĕ пултарнă, пурте Санăн ирĕкӳпе пурăнать, пурте
Санăн ирĕкӳпе пулнă».

**5-мĕш сыпăк**

*Çыру тĕркемĕ тата Путек*

1 Унтан эпĕ престол çинче Лараканăн сылтăм аллинчи çыру
тĕркемне – кĕнекене – асăрхарăм. Тĕркемĕн икĕ енне те çыр-
наççĕ, ăна çичĕ сăркăч пичетпе пичетленĕççĕ. 2 Вара эпĕ хăватлă
ангела куртăм, вăл хыттăн çапла каларĕ: «Пичет сăркăчне хăй-
пăтса çак кĕнекене уçма тивĕçли кам пур?» 3 Анчах та кĕнекене
уçма тата пăхма пултаракан тӳпере те, çĕр çинче те, çĕр айĕнче
те тупăнмарĕ. 4 Эпĕ çак кĕнекене уçса вулама, ун ăшне пăхма та
пулин тивĕçли никам та тупăнманшăн чылай йĕтĕм. 5 Вара ва-
тăсенчен пĕри мана çапла каларĕ: «Ан йĕр. Акă Иуда йăхĕнчен
тухнă арăслан, Давид тăхăмĕ çĕнтерчĕ. Вăл çичĕ пичет сăркăчне
хăйпăтса кĕнекене уçма пултарать».

6 Эпӗ пӑхрӑм та, акӑ, престол умӗнче, тӑватӑ чӗр чунпа ватӑсем
хушшинче пусса Турра кӳнӗ путек пек Путек тӑнине куртӑм.
Вӑл ҫичӗ майракаллӑ та ҫичӗ куҫлӑ, ку – Туррӑн пӗтӗм ҫӗр ҫине
янӑ ҫичӗ сывлӑшӗ. 7 Хайхи Путек престол ҫинче Ларакан патне
пычӗ те Унӑн сылтӑм аллинчи кӗнекене илчӗ. 8 Вӑл ҫав кӗнекене
илсенех ҫирӗм тӑватӑ ватӑ хайхи Путек умне ӳксе пуҫҫапрӗҫ. Вӗ-
сенчен кашнин аллинчех кӗсле тата ырӑ шӑршӑллӑ фимиам тул-
тарнӑ ылтӑн савӑтчӗ; ку вӑл – сӑваплӑ ҫынсен кӗлли. 9 Хӑйсем
ҫапла каласа ҫӗнӗ юрӑ юрлаҫҫӗ: «Кӗнекене илсе пичете хӑйпӑтма
Эсӗ тивӗҫлӗ, мӗншӗн тесен Сана пусса Турра кӳчӗҫ. Эсӗ пире,
тӗрлӗ йӑх-ӑру, тӗрлӗ чӗлхеллӗ тӗрлӗ халӑх ҫыннисене, Турӑ валли
Хӑвӑн Юнупа тӳлесе илтӗн. 10 Эсӗ пире Туррӑмӑрӑн патшалла
священникӗсем турӑн, ӗнтӗ ҫӗр ҫинче эпир хуҫаланӑпӑр!» 11 Ун-
тан пӑхрӑм та престол тавра пухӑннӑ чӗр чунсене, ватӑсене тата
йышлӑ ангелсене куртӑм, вӗсен сассине илтрӗм. Ангелсен шучӗ
вуншар пинччӗ, пин-пинччӗ. 12 Вӗсем вӑйлӑ саслӑн ҫапла ка-
лаҫҫӗ: «Пусса Турра кӳнӗ Путек вӑй-хӑватпа пуянлӑх, ӑслӑлӑхпа
ҫирӗплӗх, чыс та, мухтав та, пиллӗх те илме тивӗҫлӗ!» 13 Унтан
эпӗ тӳпери тата ҫӗр ҫинчи, ҫӗр айӗнчи тата тинӗсри мӗн пур чӗрӗ
чун ҫапла каланине илтрӗм: «Престол ҫинче Ларакана тата Пу-
теке ӗмӗр-ӗмӗрех пиллӗх те, чыс та, мухтав та, вӑй-хӑват та
пултӑр!» 14 «Аминь!» – терӗҫ тӑватӑ чӗр чун. Вара ҫирӗм тӑватӑ
ватӑ ӗмӗр-ӗмӗр Пурӑнакана ӳксе пуҫҫапрӗҫ.

## 6-мӗш сыпӑк

*Пичетсене илни*

1 Унтан эпӗ Путек ҫичӗ пичетрен пӗрремӗшне хӑйпӑтса илни-
не куртӑм. Вара тӑватӑ чӗр чунран пӗри аслати сассиллӗн: «Кил-
се кур!» – тенине илтрӗм. 2 Ҫавӑнтах пӑхрӑм та, акӑ, хам умра
шурӑ ут куртӑм. Юланутҫи аллине ухӑ тата хӑйне панӑ пуҫ кӑшӑ-
лӗ тытнӑ. Хӑй ҫӗнтермешкӗн тухнӑ ҫӗнтерӳҫӗ пек пырать.

3 Путек иккӗмӗш пичете хӑйпӑтса илчӗ те, иккӗмӗш чӗр чунӗ:
«Килсе кур!» – тенине илтрӗм. 4 Вара тепӗр ут, ҫӳрен-хӗрлӗскер,
тухрӗ. Юланутҫине, ҫынсем пӗр-пӗрне вӗлерччӗр тесе, ҫӗр ҫинчи
канӑҫлӑха илме ирӗк тата пысӑк хӗҫ панӑ.

5 Путек виҫҫӗмӗш пичете хӑйпӑтса илсен, виҫҫӗмӗш чӗр чунӗ:
«Килсе кур!» – тенине илтрӗм. Вара пӑхрӑм та хура ут куртӑм.

Юланутҫи аллине тараса тытнӑ. 6 Унтан эпӗ тӑватӑ чӗр чун енчен
килекен сасса илтрӗм. «Пӗр йӗкӗр ывӑҫ тулӑ пӗр динарий тӑрать,
виҫӗ йӗкӗр ывӑҫ урпа та пӗр динарий тӑрать. Йывӑҫ ҫӑвӗпе хӗрлӗ
эрехе вара ан тӗкӗн!» – терӗ ҫав сасӑ.

7 Путек тӑваттӑмӗш пичете хӑйпӑтса илсен, тӑваттӑмӗш чӗр чу-
нӗ: «Килсе кур!» – тенине илтрӗм. 8 Вара пӑхрӑм та шупка-ту-
рӑ ут куртӑм. Юланутҫи Вилӗм ятлӑ, ун хыҫҫӑн ҫӳрекенӗ – Та-
мӑк. Ҫав юланутҫӑна ҫӗрӗн тӑваттӑмӗш пайне хӗҫпе, выҫлӑхпа,
вӗлерекен чир-чӗрпе, ҫӗр ҫинчи тискер кайӑксемпе пӗтерме
ирӗк панӑ.

9 Путек пиллӗкмӗш пичете хӑйпӑтса илсен, эпӗ парне вырӑнӗ
айӗнче Турӑ сӑмахӗшӗн, Христос ҫинчен ҫирӗплетсе пӗлтернӗ-
шӗн вӗлернисен чунӗсене куртӑм. 10 Вӗсем хыттӑн: «Святой тата
Чӑн Патшамӑр! Мӗншӗн Эсӗ ҫак тарана ҫитсе те ҫӗр ҫинчи сын-
сене пирӗн юншӑн суд туса тавӑрмастӑн? Тата хӑҫанччен кӗт-
мелле?» – тесе ӳпкелешрӗҫ. 11 Унтан вӗсене пурне те шурӑ тум-
тир пачӗҫ, хӑйсем пекех вилес юлташӗсен, ӗненекен тӑванӗсен
шучӗ тулса ҫитессе тата тепӗртак, лӑпкӑн кӗтме хушрӗҫ.

12 Путек улттӑмӗш пичете хӑйпӑтса илсен, ҫакна куртӑм: питӗ
вӑйлӑн ҫӗр чӗтренчӗ, хӗвел хуйхӑ тумтирӗ пек хуралчӗ, уйӑх юн-
ланнӑ пек хӗрелчӗ. 13 Смоква йывӑҫҫин пиҫсе ҫитмен ҫимӗҫӗсем
вӑйлӑ ҫилпе ҫӗр ҫине тӑкӑннӑ пекех тӳпери ҫӑлтӑрсем ҫӗр ҫине
тӑкӑнчӗҫ. 14 Тӗрке пек чӗркенсе, тӳпе ҫухалчӗ, тусемпе утравсем
пурте хӑйсен вырӑнӗнчен тапранса куҫрӗҫ. 15 Ҫӗр ҫинчи патша-
сем те, улпутсем те, пуянсем те, ҫар пуҫӗсем те, хуҫасем те, ытти
мӗн пур чурасемпе ирӗклисем те ту хӑвӑлӗсемпе хушӑкӗсене пы-
танса пӗтрӗҫ. 16 «Пирӗн ҫине ӳкӗр, – терӗҫ вӗсем тусемпе чулсе-
не, – пире престол ҫинче Лараканӑн сӑнӗнчен тата Путек ҫил-
линчен пытарса хӑварӑр! 17 Унӑн ҫиллин аслӑ кунӗ ҫитрӗ! Ҫак
ҫилле кам тӳссе ирттерме пултарӗ?»

### 7-мӗш сыпӑк

*Пичет лартса палӑртни*

1 Ҫакӑн хыҫҫӑн эпӗ тӑватӑ ангела куртӑм. Вӗсем, ҫӗр ҫине те,
тинӗс ҫине те, нимӗнле йывӑҫ ҫине те ҫил ан вӗртӗр тесе, ҫӗрӗн
тӑватӑ кӗтессинче ҫӗр ҫинчи тӑватӑ ҫиле чарса тӑраҫҫӗ. 2 Унтан
эпӗ хӗвел тухӑҫ енчен Чӗрӗ Туррӑн пичетне тытнӑ тепӗр ангел

тухса хăпарнине куртăм. Çĕрпе тинĕсе сăтăр тума ирĕк панă тă-
ватă ангела вăл вăйлă саслăн çапла каларĕ: [3]«Хамăр Туррăмăрăн
чурисен çамкисем çине пичет лартса палăртса тухиччен çĕре те,
тинĕсе те, йывăçсене те сăтăр ан тăвăр!» [4]Вара эпĕ пичетпе па-
лăртнисен хисепне илтрĕм: Израилĕн мĕн пур йăхĕсенчен пи-
четпе палăртнисем пурĕ çĕр хĕрĕх тăватă пинччĕ. [5]Иуда йăхĕн-
чен вун икĕ пин çынна пичетпе палăртнă; Рувим йăхĕнчен –
вун икĕ пин; Гад йăхĕнчен – вун икĕ пин; [6]Асир йăхĕнчен – вун
икĕ пин; Неффалим йăхĕнчен – вун икĕ пин; Манассия йăхĕн-
чен – вун икĕ пин; [7]Симеон йăхĕнчен – вун икĕ пин; Левий
йăхĕнчен – вун икĕ пин; Иссахар йăхĕнчен – вун икĕ пин; [8]За-
вулон йăхĕнчен – вун икĕ пин; Иосиф йăхĕнчен – вун икĕ пин;
Вениамин йăхĕнчен – вун икĕ пин.

[9]Вара эпĕ пăхрăм та, акă, никам шутласа кăларайми йышлă
халăх куртăм. Унта тĕрлĕ йăх-ăру, тĕрлĕ чĕлхеллĕ тĕрлĕ халăх
çыннисем. Вĕсем престол умĕнче, Путек умĕнче тăраççĕ. Хăйсем
шурă тумтир тумланнă, аллисене пальма турачĕсем тытнă. [10]Вĕ-
сем вăйлă саслăн: «Çăлăнăç престол çинче ларакан Туррăмăрпа
Путекре!» – теççĕ. [11]Престол тавра, ватăсемпе тăватă чĕр чун
тавра, мĕн пур ангелсем тăратчĕç. Вĕсем пурте престол умне
ӳпне ӳксе Турра пуççапрĕç. [12]«Аминь! Туррăмăра ĕмĕр-ĕмĕрех
пиллĕхпе мухтав, ăслăлăхпа тав, чыс та, вăй-хăват та, тĕреклĕх
те пултăр! Аминь», – терĕç вĕсем.

[13]Ватăсенчен пĕри калаçа пуçларĕ. «Çак шурă тумтирлисем
камсем тата ăçтан килнине пĕлетĕн-и?» – тесе ыйтрĕ вăл ман-
ран. [14]«Ырă çыннăм! Ăна эсĕ хăвах пĕлетĕн», – терĕм эпĕ. Вара
вăл мана çапла каларĕ: «Ку çынсем – тĕрĕслев асапĕ витĕр
тухнисем. Вĕсем хăйсен тумтирне Путек Юнĕпе çуса тасатнă,
шуратнă. [15]Çавăнпа вĕсем Турă престолĕ умĕнче тăраççĕ, Турă
Çуртĕнче Уншăн кунĕн-çĕрĕн тăрăшаççĕ. Престол çинче Лара-
кан вара вĕсемпе пĕрле пурăнĕ. [16]Вĕсен ĕнтĕ текех нихăçан та
хырăмĕ выçмĕ, ăшĕ те хыпмĕ. Вĕсене имĕнле хĕвел те, шăрăх
та пĕçертмĕ. [17]Мĕншĕн тесен престол умĕнчи Путек вĕсен кĕ-
тӳçи пулĕ, вĕсене чĕрĕлĕх шывĕпе тапса тăракан çăлкуçсем пат-
не ертсе кайĕ. Турă вĕсен куçĕнчи кирек епле куççульне те
шăлса ярĕ».

## 8-мӗш сыпӑк

*Ҫиччӗмӗш пичет тата ылтӑн тӗтӗркӗч*

1 Путек ҫиччӗмӗш пичете хӑйпӑтса илсессӗн, тӳпе шӑплӑха
путрӗ, ҫапла ҫур сехете яхӑн тӑчӗ. 2 Вара эпӗ Турӑ умӗнче тӑракан
ҫичӗ трубаллӑ ҫичӗ ангела куртӑм. 3 Унтан ылтӑн тӗтӗркӗч тытнӑ
тепӗр ангел парне вырӑнӗ умне пырса тӑчӗ. Ӑна престол умӗнчи
ылтӑн парне вырӑнӗ ҫине хумашкӑн пит нумай фимиам тата мӗн
пур сӑваплӑ ҫынсен кӗллисене панӑччӗ. 4 Ангел аллинчи фими-
амран тухакан тӗтӗм, сӑваплисенӗн кӗллипе пӗрле, Турӑ патне
ҫӗкленетчӗ. 5 Унтан ангел парне вырӑнӗ ҫинчи вута тӗтӗркӗч ӑш-
не тултарчӗ те ӑна ҫӗр ҫине тӑкрӗ. Ҫав самантрах ҫӗр ҫинче асла-
ти сасси кӗрлесе кайрӗ, ҫиҫӗм ялтӑртатрӗ, ҫӗр чӗтренме тытӑнчӗ.

*Ҫичӗ трубаллӑ ҫичӗ ангел*

6 Вара ҫичӗ трубаллӑ ҫичӗ ангел трубисене кӑшкӑртма хатӗр-
ленчӗҫ.

7 Пӗрремӗш ангелӗ трубине кӑшкӑртрӗ те, ҫӗр ҫине юнпа ху-
тӑш вутлӑ пӑр ҫума пуҫларӗ. Вара ҫӗр ҫинчи йывӑҫсен виҫҫӗмӗш
пайӗ тата пӗтӗм ешӗл курӑк ҫунса кайрӗ.

8 Иккӗмӗш ангелӗ трубине кӑшкӑртрӗ те, темскер, вут-хӗм
сирпӗтекен пысӑк ту пекскер, тинӗсе ӳкрӗ. Вара тинӗсӗн виҫҫӗ-
мӗш пайӗ юн пулса тӑчӗ, 9 тинӗсри чӗрӗ чунсен виҫҫӗмӗш пайӗ
вилсе пӗтрӗ, тинӗс ҫинчи карапсен те виҫҫӗмӗш пайӗ пӗтрӗ.

10 Виҫҫӗмӗш ангелӗ трубине кӑшкӑртрӗ те, ҫутаткӑҫ пек ҫунса,
тӳперен пысӑк ҫӑлтӑр ӳкрӗ. Вӑл юхан шывсемпе ҫӑлкуҫсен виҫ-
ҫӗмӗш пайӗ ҫине ӳкрӗ. 11 Ҫав ҫӑлтӑр Армути ятлӑччӗ. Вара ҫӗр
ҫинчи юхан шывсен виҫҫӗмӗш пайӗ армути тутиллӗ пулса тӑчӗ.
Вӑл йӳҫек шыва пула нумай-нумай ҫын вилсе пӗтрӗ.

12 Тӑваттӑмӗш ангелӗ трубине кӑшкӑртрӗ те, хӗвелӗн виҫҫӗмӗш
пайӗ, уйӑхӑн виҫҫӗмӗш пайӗ тата ҫӑлтӑрсен виҫҫӗмӗш пайӗ сӳн-
чӗ, тӗттӗмленсе ларчӗ. Ҫавна пула кунӑн виҫҫӗмӗш пайӗ, ҫӗрӗн
виҫҫӗмӗш пайӗ пекех, ҫутӑсӑр тӑрса юлчӗ. 13 Унтан эпӗ пӑхрӑм
та ҫӳл тӳпере вӗҫсе пыракан ангела куртӑм. Вӑл вӑйлӑ caслӑн:
«Юлашки виҫӗ ангел кӑшкӑртма хатӗрленеҫҫӗ, вӗсен трубисен
сассисене илтсессӗн ҫӗр ҫинче пурӑнакансене хуйхӑ пулӗ, хуйхӑ,
хуйхӑ!» – терӗ.

### 9-мӗш сыпӑк

1 Пиллӗкмӗш ангелӗ трубине кӑшкӑртрӗ те, эпӗ тӳперен ҫӗр
ҫине ҫӑлтӑр ӳкнине куртӑм. Ҫӑлтӑрне тӗпсӗрлӗхе уҫмалли ҫӑраҫ-
ҫи панӑччӗ. 2 Вӑл вара тӗпсӗрлӗх шӑтӑкне уҫрӗ те, унтан, пысӑк
кӑмака анинчен тухнӑ евӗр, тӗтӗм палкаса тухрӗ. Тӗпсӗрлӗхрен
йӑсӑрланакан тӗтӗмпе вара хӗвел те, сывлӑш та тӗттӗмленчӗ.
3 Тӗтӗм ӑшӗнчен хӗрлӗ шӑрчӑксем йӑтӑнса тухрӗҫ, вӗсене ҫӗр
ҫинчи скорпионӑнни пек вӑй-хӑват панӑччӗ. 4 Анчах та хӗрлӗ
шӑрчӑксене ҫӗр ҫинчи ешӗл йывӑҫ-курӑка сӑтӑр тума чарнӑ,
ҫамкисем ҫине Турӑ пичечӗ лартса палӑртман ҫынсене ҫеҫ сӑтӑр
тума каланӑ. 5 Хӗрлӗ шӑрчӑксене ҫав ҫынсене вӗлерме хушман,
вӗсен ҫынсене пилӗк уйӑха яхӑн асап кӑтартмалла пулнӑ. Скор-
пион сӑхнипе ҫын епле асапланать, хӗрлӗ шӑрчӑксем те ҫавнаш-
калах асаплантармалла. 6 Ун чухне ҫынсем вилӗм шырӗҫ, анчах
ӑна тупаймӗҫ; вилесшӗн пулӗҫ, анчах вилӗм вӗсенчен тарӗ.

7 Хӗрлӗ шӑрчӑксем ҫапӑҫӑва хатӗр ҫар лашисем евӗрлӗччӗ. Вӗ-
сен пуҫӗ ҫинче ылтӑн пуҫ кӑшӑлӗ пеккиччӗ, сӑнӗпе вара вӗсем
этем евӗрлӗрехчӗ. 8 Ҫӑмӗсем вӗсен хӗрарӑм ҫӳҫӗ пек, шӑлӗсем
арӑслан шӑлӗ пек. 9 Ҫийӗсенче вӗсен ҫар тумтирӗ пек тимӗр тум-
тир, ҫуначӗсен шавӗ вара ҫапӑҫӑва ыткӑнакан йышлӑ лашасен тата
ҫар урапisен шавӗ-кӗмсӗртетӗвӗ евӗр. 10 Хӗрлӗ шӑрчӑксен хӳри
вӗҫӗнче скорпион сӑнни пек сӑнӑ, ҫынсене сӑтӑр тумашкӑн вӗ-
сене пилӗк уйӑха яхӑн ирӗк панӑ. 11 Хӗрлӗ шӑрчӑксен патши –
тӗпсӗрлӗх ангелӗ, еврейла ӑна Аваддон теҫҫӗ, грекла – Аполлион*.
12 Пӗр хуйхӑ иртрӗ, акӑ, ун хыҫӗнчен тепӗр икӗ хуйхӑ килет.

13 Улттӑмӗш ангелӗ трубине кӑшкӑртрӗ те, вара эпӗ сасӑ илтрӗм.
Ҫав сасӑ Турӑ умӗнчи ылтӑн парне вырӑнӗн тӑватӑ мӑйракинчен
пӗр харӑс тухать. 14 «Ефрат ятлӑ аслӑ юхан шыв хӗрринчи сӑн-
чӑрланӑ тӑватӑ ангела ирӗке яр», – терӗ ҫав сасӑ трубаллӑ улттӑ-
мӗш ангела. 15 Вара хайхи тӑватӑ ангела ирӗке ячӗҫ. Вӗсене ҫӗр
ҫинчи ҫынсен виҫҫӗмӗш пайне вӗлермешкӗн ҫак сехет, ҫак кун,
ҫак уйӑх, ҫак ҫул валли хатӗр тӑратнӑ пулнӑ. 16 Эпӗ утлӑ ҫарӑн
хисепне илтрӗм: унӑн йышӗ ик ҫӗр хут пин-пинччӗ. 17 Мана
курӑнура лашасемпе юланутҫӑсем акӑ еплерех курӑнчӗҫ. Вӗсем

* 9:11 *Аполлион* – пӗтермӗш тенине пӗлтерет.

çинче вут пек хĕрлĕ, гиацинт пек кăвак, кӳкĕрт пек сарă çар
тумтирĕ. Лашисен пуçĕсем арăслан пуçĕ пек, çăварĕсенчен вутпа
тĕтĕм тата кӳкĕрт чашласа тухать. 18 Вĕсен çăварĕсенчен тухакан
çак виçĕ инкекпе – вутпа, тĕтĕмпе тата кӳкĕртпе – çынсен виç-
çĕмĕш пайĕ вилсе пĕтрĕ. 19 Лашисен вăй-хăвачĕ çăварĕсемпе хӳ-
рисенчеччĕ, хӳрисем вара çĕленсем пекчĕ. Вĕсем çав çĕлен пуçлă
хӳрисемпе сăха-сăха çынсене пĕтеретчĕç.

20 Çак виçĕ инкекпе вилмесĕр юлнисем хăйсен ĕçĕсемшĕн
ӳкĕнмерĕç. Вĕсем усал сывлăшсене тата ылтăн, кĕмĕл, пăхăр,
чул, йывăç кĕлеткесене – курма та, илтме те, çӳреме те пулта-
райманскерсене – пурпĕрех пуççапма пăрахас темерĕç. 21 Хăйсем
çын вĕлернĕшĕн те, тухатнăшăн та, аскăнланнăшăн та, вăрланă-
шăн та пурпĕрех ӳкĕнмерĕç.

## 10-мĕш сыпăк

*Çыру тĕркемĕ тытнă ангел*

1 Унтан эпĕ тӳперен анакан тепĕр хăватлă ангела куртăм. Вăл
пĕлĕтпе чĕркеннĕччĕ, пуçĕ çинче асамат кĕперĕ тăратчĕ. Хăйĕн
пичĕ хĕвел пек çиçетчĕ, урисем вут юпа евĕрлĕччĕ. 2 Аллинче
унăн пысăках мар, уçă çыру тĕркемĕччĕ. Сылтăм урипе вăл тинĕс
çине пусрĕ, сулахаййипе – çĕр çине, 3 унтан арăслан сасси пек
вăйлă саслăн кăшкăрса ячĕ. Ун сассине хирĕç çичĕ аслати сасă
пачĕ. 4 Çичĕ аслати сасă парсассăн эпĕ çырма хатĕрлентĕм, анчах
та тӳперен: «Çичĕ аслати мĕн каланине çырса ан хур, никама та
ан пĕлтер», – тени илтĕнчĕ. 5 Унтан эпĕ çакна куртăм: хайхи
хăрах урипе тинĕс çине пуснă, хăраххипе çĕр çине пуснă ангел
аллине тӳпенелле çĕклерĕ. 6 Вара вăл ĕмĕр-ĕмĕрех Пурăнакан
ячĕпе, тӳпепе тӳперине, çĕрпе çĕр çинчине, тинĕспе тинĕсрине
йăлтах Пултаракан ячĕпе тупа туса: «Ĕнтĕ урăх вăхăт юлмарĕ, –
терĕ. 7 – Çиччĕмĕш ангел трубине кăшкăртма хатĕрленсен, кăш-
кăртса ярсан, Туррăн вăрттăнлăхĕ пулса çитĕ. Ун çинчен Вăл Хă-
йĕн чурисене, пророксене, малтанах пĕлтернĕ».

8 Вара маларах мана тӳперен илтĕннĕ сасă каллех манпа калаçа
пуçларĕ: «Кай та хăрах урипе тинĕс çинче, хăраххипе çĕр çинче
тăракан ангел аллинчи уçă çыру тĕркемне ил», – терĕ. 9 Эпĕ ан-
гел патне пытăм та: «Çыру тĕркемне мана парсамччĕ», – терĕм.
«Илех, çисе яр ăна, – тавăрчĕ вăл. – Ăна çисен, туту-çăварунта

пыл тути калĕ, анчах та ăш-чиккӳне йӳçек касĕ». 10 Эпĕ ангел
аллинчи çыру тĕркемне илтĕм те ăна çисе ятăм. Çинĕ чухне ту-
та-çăварăмра пыл тути каларĕ, анчах та ăш-чикĕме йӳçек касса
кайрĕ. 11 «Санăн тĕрлĕ чĕлхеллĕ халăхсемпе ăрусем çинчен, пат-
шасем çинчен пророкла каласа татах пĕлтермелле пулĕ», — терĕ
вара мана ангел.

## 11-мĕш сыпăк

### *Икĕ пророк*

1 Мана виçе карчĕсем картнă патак евĕрлĕ туя пачĕç. Унтан
çапла каларĕç: «Тăр та Турă Çурчĕпе парне вырăнне виçсе тух,
унта пуççапакансем миçен пулнине те шутла. 2 Турă Çурчĕн ту-
лаш картишне вара шута ан ил, мĕншĕн тесен вăл чăн Турра
пĕлмен халăхсем валли. Вĕсем сăваплă хулара хĕрĕх икĕ уйăх
хушши хуçаланĕç. 3 Эпĕ Хамăн икĕ пророкăма хăват парăп. Вĕ-
сем, ӳкĕнӳ тумтирĕ тăхăнса, пин те ик çĕр утмăл кун хушши
пророкла каласа вĕрентĕç». 4 Çав пророксем — çĕре тытса тăра-
кан Турă умĕнчи икĕ çу йывăççи, икĕ çутаткăç. 5 Кам та пулин
пророксене сăтăр тăвас тесен, вĕсен çăварĕнчен вут-çулăм тухĕ
те тăшманĕсене кĕллентерĕ. Пророксене сăтăр тăвас текенсем
вилĕме тивĕçлĕ. 6 Хăйсем пророкла калаçнă чухне, çĕр çине çăва-
кан çумăра чармашкăн, вĕсем тӳпене хупма та пултараççĕ. Кăмă-
лĕсем пулсан, вĕсем юхан шывсене юн тума, çĕр çине тем тĕрлĕ
чир-чĕр яма та пултараççĕ. Вĕсене çавнашкал ирĕк панă. 7 Вĕсем
хăйсен пророкла сăмахне вĕçлесен, тĕпсĕрлĕхрен тискер кайăк
тухĕ те, вĕсемпе çапăçса, çĕнтерĕ; вĕсене вĕлерĕ. 8 Вара вĕсен
виллисем аслă хула урамĕнче выртĕç. Вăл хулана ытарлăн Содом
теççĕ, Египет теççĕ; Хуçамăра çавăнта пăталанă. 9 Тĕрлĕ чĕлхеллĕ
мĕн пур халăх, йăх-ăру çыннисем виçĕ кун çурă хушши вилесене
курма çӳрĕç, вĕсен ӳчĕсене тупăклăха хуртармĕç. 10 Çав пророк-
сем пурăнни çынсемшĕн асап пек пулнă. Çавăнпа çĕр çинче
пурăнакансем вĕсем вилнишĕн савăнĕç, пĕр-пĕрне парнесем па-
рĕç. 11 Анчах та виçĕ кун çурăран Турă пророксем ăшне Хăйĕн
чĕрĕлĕх сывлăшне кĕртрĕ, вара вĕсем урисем çине тăчĕç. Çакна
куракансем хăраса-чĕтресе ӳкрĕç. 12 Унтан икĕ пророкĕ те тӳпе-
рен хăватлă сасă илтрĕç. «Кунта хăпарăр!» — терĕ вĕсене сасă. Ва-
ра тăшманĕсен куçĕ умĕнчех вĕсем, пĕлĕт çине ларса, тӳпене

çěкленчěç. 13 Çав самантрах вăйлăн çěр чěтренчě те, хулан вун-
нăмěш пайě ишěлсе анчě. Çěр чěтреннипе çичě пин çын вилчě.
Ыттисем вара, вилесле хăраса ӳксе, Çӳлти Турра мухтарěç. 14 Ик-
кěмěш хуйхă иртрě. Анчах та, акă, виççěмěш хуйхă çитет.

*Çиччěмěш труба*

15 Çиччěмěш ангелě трубине кăшкăртсан, тӳпере вăйлă сасăсем
янăраса кайрěç. «Çěр çинчи патшалăх Хуçа Туррăмăрпа Унăн
Христосěн патшалăхě пулса тăчě! Вăл ěмěр-ěмěрех Патша пулě!» –
терěç сасăсем. 16 Вара Турă умěнчи хăйсен престолěсем çинче
ларакан çирěм тăватă ватă ӳпне ӳксе Турра пуççапрěç. 17 Вěсем
çапла каласа кěлтурěç: «Эй, Хуçамăр, Пурне те тытса тăракан
Турăçăм, Эсě пур, пулнă, пулăн! Эпир Сана хăватлă вăй илсе
Патшана ларнăшăн тав тăватпăр. 18 Чăн Турра пěлмен халăхсем
урсах кайнăччě, халě ěнтě Санăн çиллӳ çитрě. Вилнисене суд
тума, Хăвăн чурусене, пророксене тата сăваплисене, Хăвăн ятун-
тан хăракансене – аслисемпе кěçěннисене те – хăйсем тивěçни-
не тавăрса пама вăхăт çитрě. Çěре пěтерекенсене пěтерме вăхăт
çитрě!» 19 Унтан тӳпери Турă Çурчě уçăлчě те, Турă Çуртěнчи
Унăн халалěн арчи курăнса кайрě. Вара çиçěм ялтăртатрě, аслати
сасси кěрлерě, çěр чěтренчě тата шултра пăр çурě.

## 12-мěш сыпăк

*Хěрарăмпа аçтаха*

1 Унтан тӳпере тěлěнмелле паллă – хěвел тумтирлě хěрарăм –
курăнчě. Унăн ури айěнче уйăх, пуçě çинче вун икě çăлтăртан
тунă пуç кăшăлě. 2 Çав хěрарăм, ача çуратма вăхăчě çитнěскер,
тертленсе кăшкăрать. 3 Унтан тӳпере тепěр паллă курăнчě: çичě
пуçлă, вунă мăйракаллă, çичě пуç кăшăллě пысăк та хěрлě аçтаха.
4 Вăл хӳрипеле сулчě те тӳпери çăлтăрсен виççěмěш пайне çěр
çине шăлса тăкрě. Хěрарăм çуратсассăнах унăн ачине çисе ярас-
шăн пулса, аçтаха хěрарăм умне тăчě. 5 Хěрарăм ывăл ача çурат-
рě. Çав ывăлăн мěн пур халăхсене тимěр туяпа пăхмалла пулě.
Çавăнпа та ывăл ачана Турă патне, Унăн престолě патне илчěç.
6 Вара хěрарăм пуш хире тарчě. Унта Турă ун валли вырăн хатěр-
лесе хунă, çавăнта хěрарăма пин те ик çěр утмăл кун хушши пăх-
са усрамалла пулнă.

7 Унтан тӳпере вӑрҫӑ пуҫланса кайрӗ. Михаилпа унӑн ангелӗ-
сем аҫтахапа ҫапӑҫрӗҫ. Аҫтахапа унӑн ангелӗсем те ӑна хирӗҫ
вӑрҫма тухрӗҫ. 8 Анчах та вӗсем, ҫӗнтереймен пирки, тӳпери хӑй-
сен вырӑнне ҫухатрӗҫ. 9 Ҫапла вара пысӑк аҫтахана, шуйттан тата
сатана теекен авалхи ҫӗлене, пӗтӗм ҫут тӗнчене илӗртсе ултала-
канскере, ҫӗр ҫине ҫапса антарчӗҫ. Хӑйӗнпе пӗрле тата унӑн ан-
гелӗсене те ҫӗре ӳкерчӗҫ. 10 Унтан эпӗ тӳперен ҫапла калакан
вӑйлӑ сасӑ илтрӗм: «Ёнтӗ Туррӑмӑрӑн ҫӑлас вӑхӑчӗ, хӑвачӗ, пат-
шалӑхӗ ҫитрӗ; ёнтӗ Унӑн Христосӗн влаҫӗ ҫитрӗ. Мӗншӗн тесен
ёненекен тӑванӑмӑрсем ҫинчен Туррӑмӑра кунӗн-ҫӗрӗн элек па-
ракан элекҫӗне ҫапса антарчӗҫ. 11 Вӗсем ӑна Путек Юнӗпе тата
хӑйсем каласа пӗлтернӗ сӑмахпа ҫӗнтерчӗҫ, вилӗмрен хӑрамасӑр
пурӑнӑҫне шеллемерӗҫ. 12 Эй, ҫӳлти тӳпе! Эй, ҫӳлте пурӑнакан-
сем! Халӗ ёнтӗ савӑнмаллипе савӑнӑр! Анчах та сире, ҫӗрпе ти-
нӗс ҫинче пурӑнакансене, хуйхӑ пулӗ, мӗншӗн тесен сирӗн патӑ-
ра шуйттан анчӗ! Хӑйӗн вӑхӑчӗ сахал пулнине пӗлнӗрен вӑл ха-
ярлӑхпа тулса ҫитрӗ!»

13 Аҫтаха, хӑйне ҫӗр ҫине ҫапса антарнине туйса илсен, ывӑл ача
ҫуратнӑ хӗрарӑма йӗрлеме тытӑнчӗ. 14 Анчах та хӑйӗн валли ха-
тӗрленӗ пуш хирти вырӑна вӗҫсе каймашкӑн хӗрарӑма пысӑк
ӑмӑрт кайӑкӑн икӗ ҫунатне панӑ пулнӑ. Ҫавӑнта, ҫӗленрен аякра,
ӑна виҫӗ ҫул ҫурӑ пӑхса усрамалла пулнӑ. 15 Вара, хӗрарӑма шыв-
па юхтарса ярас тесе, ун хыҫӗнчен хайхи ҫӗлен хӑйӗн ҫӑварӗнчен
юхан шыв пек шыв кӑларса ячӗ. 16 Анчах та хӗрарӑма ҫӗр пулӑш-
рӗ: вӑл уҫӑлчӗ те аҫтаха ҫӑварӗнчен тухнӑ юхан шыва ҫӑтса ячӗ.
17 Вара хӗрарӑма тарӑхса ҫитнӗ аҫтаха хӗрарӑм йӑхӗнчи ытти ҫын-
семпе, Турӑ пил-хушӑвӗсене тата Иисус Христос вӗрентӗвне
тытса пыракансемпе, ҫапӑҫма кайрӗ.

## 13-мӗш сыпӑк

*Икӗ тискер кайӑк*

1 Тинӗс хӗрринчи хӑйӑр ҫинче тӑнӑ чухне эпӗ тинӗсрен туха-
кан ҫичӗ пуҫлӑ, вунӑ мӑйракаллӑ тискер кайӑка куртӑм. Мӑйра-
кисем ҫинче унӑн вунӑ пуҫ кӑшӑлӗччӗ, кашни пуҫӗ ҫинех Турра
хурлакан пӗрер ят ҫырнӑ. 2 Манӑн умри тискер кайӑк барс евӗр-
лӗрехчӗ. Урисем унӑн упан пек, ҫӑварӗ арӑсланӑн пек. Аҫтаха
ӑна хӑйӗн вӑйне, престолне тата пуҫ пулмалли аслӑ ирӗкне панӑ.

3-4 Пăхрăм та, унăн пуçĕсенчен пĕри вилмеллех аманнă пек ку-
рăнчĕ, анчах та çав вилмеллех суран тӳрленчĕ. Тискер кайăка
курнипе пĕтĕм тĕнче тĕлĕнчĕ. Вара пурте тискер кайăка вăй-хă-
ват панă аçтахана пуççапрĕç. Унтан тискер кайăка çапла каласа
пуççапрĕç: «Çак тискер кайăк пекки урăх пур-и? Кам унпа çа-
пăçма пултарайĕ?»

5 Тискер кайăка мăнкăмăлланса калаçмалăх, Турра хурламалăх
чĕлхе-çăвар тата хĕрĕх икĕ уйăх хушши усал тумалăх ирĕк панăч-
чĕ. 6 Вара вăл Турă ятне, Вăл пурăнакан вырăна, тӳпере пурăна-
кансене хур тăвас тесе, Турра хурлама çăварне уçрĕ. 7 Тата çак
тискер кайăка сăваплисемпе çапăçма, вĕсене çĕнтерме, тĕрлĕ
йăх-ăрусемпе, тĕрлĕ чĕлхеллĕ тĕрлĕ халăхсемпе пуç пулма ирĕк
панăччĕ. 8 Тĕнчене пултаричченех пусса Турра кӳнĕ Путекĕн пу-
рăнăç кĕнекине çĕр çинче пурăнакансенчен камăн ятне çырса
хуман, çавсем пурте ăна пуççапĕç. 9 Илтме хăлха пурри илттĕр.
10 Тыткăна илсе каякана хăйне тыткăна илсе кайĕç; хĕçпе вĕлере-
кене хăйне хĕçпе вĕлерĕç*. Çав саманара сăваплисен чăтăмлă та
çирĕп ĕненӳллĕ пулмалла.

11 Унтан эпĕ çĕр ăшĕнчен тухакан тепĕр тискер кайăка куртăм.
Унăн Путекĕнни пек икĕ мăйрака, калаçасса хăй аçтаха пек
калаçать. 12 Пĕрремĕш тискер кайăкăн вăй-хăватне ăна та панă,
вăл – пĕрремĕш тискер кайăк умĕнче ĕçлесе тăраканĕ, пулăша-
канĕ. Çавскер пĕтĕм çĕре, çĕр çинче пурăнакансене вилмеллех
аманса тӳрленнĕ тискер кайăка пуççаптарасшăн. 13 Вăл тĕлĕн-
мелле паллăсем кăтартать: çынсен куçĕ умĕнчех тӳперен çĕр çи-
не вут-çулăм антарать. 14 Пĕрремĕш тискер кайăк умĕнче тĕлĕн-
мелле паллăсем кăтартса, вăл çĕр çинче пурăнакансене илĕртсе
улталать. Вăл çынсене хĕçпе суранланнă, анчах та чĕрĕ тискер
кайăкăн сăнарне ăсталама хистет. 15 Çав сăнар калаçма та, хăйне
пуççапас теменнисене вĕлерттерме те пултартăр тесе, иккĕмĕш
тискер кайăка малтанхин сăнарĕ ăшне чун вĕрсе кĕртме ирĕк па-
нă. 16 Вăл пур çынсене те: аслисемпе кĕçĕннисене те, пуянсемпе
чухăнсене те, ирĕклисемпе чурасене те – сылтăм алли е çамки
çине çыру палли лартма хистет. 17 Камăн çак çыру палли çук, вăл
сутма та, илме те пултараймасть. Çыру паллинче тискер кайăкăн

* 13:10 Хăш-пĕр авалхи ал çырусенче ку сăвă урăхларах: «*Тыткăна лекме пӳрнĕ çын тыткăна лекĕ, хĕçпе вилме пӳрнине хĕçпе вĕлерĕç*».

ятне е çав ята палăртакан хисепе çырнă. [18] Кунта ăслăлăх кирлĕ.
Камăн ăсĕ пур, вăл тискер кайăк ятне палăртакан хисепе хăех
тавçăрса илтĕр. Çав хисеп – этемле хисепех: улт çĕр утмăл улттă.

### 14-мĕш сыпăк

*Путек Сион тăвĕ çинче*

[1] Унтан эпĕ пăхрăм та, акă, Сион тăвĕ çинче Путек тăнине
куртăм. Унпа пĕрле тата çĕр хĕрĕх тăватă пин çынччĕ. Вĕсен çам-
кисем çинче Унăн Ашшĕн ячĕччĕ*. [2] Вара тӳперен шыв кĕрленĕ
пек, вăйлă аслати сасси пек сасă илтрĕм. Тата кĕслисене каласа
ларакан кĕслеçĕсен сасси пек сасă илтрĕм. [3] Престолпа тăватă
чĕр чун умĕнче, ватăсем умĕнче çав çынсем çĕнĕ юрă пек юрă
юрлаççĕ. Çĕр çинчи пурăнăç тыткăнĕнчен тӳлесе илнĕ çав çĕр
хĕрĕх тăватă пин çынсăр пуçне никам та ку юрра юрлама пулта-
раймарĕ. [4] Юрлаканĕсем хĕрарăмпа çывăрса вараланман, таса
çынсем. Путек кирек ăçта кайсассăн та, вĕсем Ун хыçĕнчен çӳ-
реççĕ. Вĕсене Турăпа Путекĕн малтанхисем пулмашкăн çынсем
хушшинчен суйласа, тӳлесе илнĕ. [5] Вĕсен чĕлхи-çăварĕ суялăха
пĕлмест: Турă престолĕ умĕнче вĕсем таса.

*Виçĕ ангел*

[6] Унтан эпĕ çӳл тӳпере вĕçсе иртекен тепĕр ангела куртăм. Çĕр
çинче пурăнакан тĕрлĕ чĕлхеллĕ йăх-ăрăва, халăха пĕлтермешкĕн
çав ангелăн ĕмĕрлĕх Ырă Хыпар пурччĕ. [7] Вара вăл вăйлă саслăн
çапла каларĕ: «Турăран хăрăр, Ăна мухтăр, мĕншĕн тесен Унăн
суд тумалли вăхăчĕ çитрĕ. Тӳпене, çĕре, тинĕсе тата çăлкуççене
Пултаракана пуççапăр!»

[8] Ун хыçĕнчен тепĕр ангел вĕçсе иртрĕ. «Аслă хула Вавилон
тĕп пулчĕ, тĕп пулчĕ! Мĕншĕн тесен çав хула хăй аскăнлăхĕн ха-
яр эрехне мĕн пур халăхсене ĕçтерчĕ!» – терĕ çав ангел.

[9] Вара ун хыçĕнчен виççĕмĕш ангел вĕçсе иртрĕ. Вăл вăйлă
саслăн çапла каларĕ: «Кам тискер кайăкпа унăн сăнарне пуççа-
пать, кам хăйĕн çамки е алли çине тискер кайăкăн çыру палли-
не ларттарать, [10] çавăн Турă тарăхăвĕн куркинче хатĕрленĕ Турă

* [14:1] Хăш-пĕр авалхи ал çырусенче урăхларах: «*Вĕсен çамкисем çинче Унăн ячĕпе Ашшĕн ячĕччĕ*».

çиллин хаяр эрехне ёçме тивĕ. Ăна святой ангелсемпе Путек
куçĕ умĕнчех вутлă кӳкĕрт ăшĕнче асаплантарĕç. 11 Çав асап вучĕн
тĕтĕмĕ ĕмĕр-ĕмĕр йăсăрланса тăрĕ. Тискер кайăкпа унăн сăнарне
пуççапакансем, унăн ятне çыртарма килĕшнисем кунĕн-çĕрĕн
канлĕх тупаймĕç. 12 Çавăнпа Турă пил-хушăвĕсене тытса пыра-
кан, Иисуса ĕненекен сăваплă çынсене тӳсĕмлĕх кирлĕ пулĕ».

13 Унтан эпĕ тӳперен хама çапла калакан сасă илтрĕм: «Çырса
хур, – терĕ çав сасă, – Хуçамăра ĕненсе вилнисем, çак вăхăтран
пуçласа, телейлĕ пулĕç». «Чăнах та çапла, – тет Сывлăш, – вĕсем
ĕнтĕ хăйсен ĕçĕсенчен канĕç, мĕншĕн тесен ĕçĕсем хăйсемех вĕ-
сем çинчен калĕç».

### *Вырма вăхăчĕ*

14 Вара эпĕ пăхрăм та, акă, шурă пĕлĕт куртăм. Пĕлĕт çинче
Этем Ывăлĕ евĕрлĕскер ларать; пуçĕ çинче – ылтăн пуç кăшăлĕ,
аллинче – çивĕч çурла. 15 Унтан тӳпери Турă Çуртĕнчен тепĕр
ангел тухрĕ те пĕлĕт çинче ларакана вăйлă саслăн çапла каларĕ:
«Çурлуна ил те вырмашкăн пуçла, мĕншĕн тесен вырма вăхăчĕ
çитрĕ, çĕр çинче тыр-пул пулса çитнĕ!» 16 Вара пĕлĕт çинче ларака-
нĕ çурлипе çĕр çийĕн сулса ячĕ те çĕр çинчи тыр-пула вырса илчĕ.

17 Кайран тӳпери Турă Çуртĕнчен çурлаллă урăх ангел тухрĕ,
унăн та çурли çивĕччĕ. 18 Тата тепĕр ангелĕ, вутпа пуç пулма
ирĕк илнĕскер, парне вырăнĕ патĕнчен пычĕ. Вара вăл çивĕч
çурлаллă ангела хыттăн кăшкăрса çапла каларĕ: «Çивĕч çурлуна
ил те çĕр çинчи иçĕм çырли сапакисене кас, мĕншĕн тесен иçĕм
çырли пиçсе çитнĕ!» 19 Хайхи ангел çурлипе çĕр çийĕн сулса ячĕ
те иçĕм çырлине касса пуçтарса илчĕ. Вара ăна Турă çиллин
пысăк юхтаркăчне пăрахрĕ. 20 Çав çырлана вара хула тулашĕнчи
сĕткен пусса кăлармалли юхтаркăчра таптарĕç, юхтаркăчран юн
тапса тухрĕ. Çав юн, лаша йĕвенĕ таран тулса, виç çĕр çухрăма
яхăн сарăлса юхрĕ.

## 15-мĕш сыпăк

### *Юлашки инкексем*

1 Унтан эпĕ тӳпере хăватлă та тĕлĕнмелле тепĕр паллă асăрха-
рăм: унта юлашки çичĕ инкеклĕ çичĕ ангел курăнчĕç. Çав юлаш-
ки инкексемпе Турă çилли иртсе каймалла. 2 Эпĕ темскер, вутпа

хутăштарнă кĕленче тинĕс евĕрлĕскер, куртăм. Çав кĕленче ти-
нĕс çинче тискер кайăкпа унăн сăнарне, çыру паллипе унăн
ячĕн хисепне çĕнтернисем тăраççĕ. Вĕсем, Турă кĕслине тытса,
[3]Турă чурин Моисейăн тата Путекĕн юррине çапла каласа юр-
лаççĕ: «Эй, Хуçамăр, Пурне те тытса тăракан Туррăмăр, Санăн
ĕçӳсем аслă та тĕлĕнмелле! Эй, сăваплисен Патши! Санăн çу-
лусем тӳрĕлĕхлĕ те чăн! [4]Эй, Хуçамăр! Кам Санран хăрамасăр
тăрайтăр? Кам Санăн ятна мухтамĕ? Мĕншĕн тесен Эсĕ пĕр-
тен-пĕр таси. Мĕн пур халăхсем Сана пырса пуççапĕç, мĕншĕн
тесен Санăн тӳрĕлĕхӳ куçкĕретех!»

[5]Унтан эпĕ пăхрăм та, акă, тӳпере Турă Çурчĕ – Таса кĕлĕ
чатăрĕ – уçăлнине куртăм. [6]Вара тӳпери Турă Çуртĕнчен çичĕ
инкеклĕ çичĕ ангел тухрĕç. Вĕсем таса та шурă йĕтĕн тумтир
тăхăннă, кăкăр урлă ылтăн хăю çыхнă. [7]Вара çичĕ чĕр чунтан
пĕри çичĕ ангела ĕмĕр-ĕмĕр пурăнакан Туррăн çиллипе тултар-
нă çичĕ ылтăн курка пачĕ. [8]Çавăнтах тӳпери Турă Çурчĕ Турă
мухтавĕн, Унăн вăй-хăвачĕн тĕтĕмĕпе тулса ларчĕ. Çичĕ ангел
аллинчи çичĕ инкек иртмесĕр çав Турă Çуртне кĕме никам та
пултараймарĕ.

## 16-мĕш сыпăк

*Турă çиллин куркисем*

[1]Унтан эпĕ Турă Çуртĕнче вăйлă сасă янăраса кайнине илт-
рĕм. «Кайăр та, – терĕ çав сасă çичĕ ангела, – Турă çиллин çичĕ
куркине çĕр çине тăкăр».

[2]Пĕрремĕш ангелĕ кайрĕ те хăй куркине çĕр çине тăкрĕ. Çав
самантрах тискер кайăкăн çыру паллине ларттарнă, унăн сăнар-
не пуççапакан çынсен ӳчĕ пӳрлĕ, хăрушă та йĕрĕнмелле суранпа
витĕнчĕ.

[3]Иккĕмĕш ангелĕ хăй куркине тинĕсе тăкрĕ. Çав самантрах
тинĕс шывĕ вилнĕ çын юнĕ евĕрлĕ пулса тăчĕ. Тинĕсри мĕн пур
чĕрĕ чун вилсе пĕтрĕ.

[4]Виççĕмĕш ангел хăй куркине юхан шывсемпе çăлкуçсем çине
тăкрĕ, вара вĕсем те юн пулса тăчĕç. [5]Унтан эпĕ шыв ангелĕ çап-
ла каланине илтрĕм: «Эй, Хуçамăр! Эсĕ пур, яланах пулнă. Эсĕ
тĕрĕслĕхлĕ те таса, мĕншĕн тесен çапла суд турăн. [6]Сăваплисем-
пе пророкусен юнне юхтарнăшăн Эсĕ вĕсене юн ĕçтертĕн. Вĕсем

çавна тивĕçлĕ те». 7 Вара эпĕ парне вырăнĕ енчен тепĕр сасă илт-
рĕм. «Эй, Хуçамăр, Пурне те тытса тăракан Туррămăр! Санăн
суду тӳрĕлĕхлĕ те чăн!» — терĕ çав сасă.

8 Тăваттăмĕш ангелĕ хăй куркине хĕвел çине тăкрĕ. Хĕвеле çĕр
çинчи çынсене çунтарса яма ирĕк панăччĕ. 9 Ĕнтĕ çынсене вăйлă
шăрăх çунтара пуçларĕ, анчах та вĕсем, ӳкĕнсе Турра мухтас
вырăнне, инкексене пĕтерме пултаракан Турă ятне хурларĕç.

10 Пиллĕкмĕш ангел хăй куркине тискер кайăк престолĕ çине
тăкрĕ. Çав самантрах тискер кайăк патшалăхĕ пĕтĕмпех сĕм-тĕт-
тĕмлĕх ăшне путрĕ. Асапа тӳсеймесĕр çынсем чĕлхисене çыр-
та-çырта лартрĕç. 11 Анчах та, хăйсен ĕçĕсемшĕн ӳкĕнес вырăнне,
вĕсем инкек-асапĕсемшĕн Çӳлти Турра хурларĕç.

12 Улттăмĕш ангел хăй куркине аслă Ефрат юхан шывне тăк-
рĕ. Вара, хĕвел тухăçĕнчен килекен патшасемшĕн çул хатĕр пул-
тăр тесе, Ефрат шывĕ типсе ларчĕ. 13 Çавăн чухне эпĕ пăхрăм та
аçтаха çăварĕнчен, тискер кайăк çăварĕнчен тата суя пророк çă-
варĕнчен шапа евĕрлĕ виçĕ усал сывлăш тухнине куртăм. 14 Ку-
сем — тĕлĕнмелле паллăсем кăтартакан усал сывлăшсем. Пурне
те тытса тăракан Туррăн çак аслă кунĕнче патшасене вăрçа пухас
тесе, усал сывлăшсем пĕтĕм тĕнчери çĕр-шывсен патшисем пат-
не тухаççĕ. 15 Итлĕр! Эпĕ, вăрă пек, кĕтмен çĕртен пырăп. Сыхă
тăракан, çарамас тăрса юлса намăса кăтартас марччĕ тесе, тум-
тирне упраса пурăнакан телейлĕ! 16 Вара патшасене пĕр çĕре, ев-
рейла Армагеддон текен вырăна, пухрĕç.

17 Çиччĕмĕш ангел хăй куркине сывлăша тăкрĕ. Çав самант-
рах тӳпери Турă Çурчĕн престолĕ патĕнчен: «Мĕн пулмалли пул-
чĕ!» — текен вăйлă сасă илтĕнчĕ. 18 Вара çиçĕмсем ялтăртатма
пуçларĕç, аслати кĕрлесе авăтрĕ. Çав тери вăйлăн çĕр чĕтренчĕ.
Кунашкалли этем çĕр çинче пурăнма пуçланăранпа та пулман!
19 Аслă хула виçĕ пая арканса кайрĕ, чăн Турра пĕлмен халăхсен
хулисем ишĕлсе анчĕç. Аслă Вавилон хулине те, Хăйĕн çиллин
куркине ĕçтерес тесе, Турă Хăй асĕнчех тытрĕ. 20 Мĕн пур утрав-
сем çухалчĕç, тусем тăрса юлмарĕç. 21 Çынсем çине пĕлĕтрен те-
миçе пăт йывăрăш пăр катăкĕсем çурĕç. Çынсем, çакнашкал
пăр çунин инкекĕ пит пысăк пулнăран, асапа тӳсеймесĕр, Турра
ылханчĕç.

### 17-мӗш сыпӑк

*Аскӑн хӗрарӑмпа тискер кайӑк*

[1] Унтан ҫичӗ куркаллӑ ҫичӗ ангелтан пӗри ман патӑма пычӗ те
ҫапла каларӗ: «Курсам, эпӗ сана нумай юхан шыв ҫинче ларакан
аскӑнран та аскӑн хӗрарӑма епле суд тунине кӑтартӑп». [2] Ҫӗр
ҫинчи патшасем унпа асса пурӑнчӗҫ, ҫӗр ҫинче пурӑнакансем
унӑн ясарӗн эрехӗпе ӳсӗр ҫӳрерӗҫ». [3] Вара мана, Святой Сывлӑш
витӗмӗпе, ангел пуш хире ертсе кайрӗ. Унта эпӗ йӑм-хӗрлӗ тис-
кер кайӑк ҫине утланнӑ хӗрарӑма куртӑм. Тискер кайӑкӗ ҫине
йӑлтах Турра хурлакан ятсем ҫырса тултарнӑ, хӑй ҫичӗ пуҫлӑ та
вунӑ мӑйракаллӑ. [4] Хӗрарӑмӗ тӗксӗм хӗрлӗ хӑмач тумтир тӑхӑннӑ,
ылтӑн капӑрчӑксемпе, хаклӑ йышши чулсемпе, ӗнчӗпе илемлен-
нӗ. Аллине хӑй ылтӑн курка тытнӑ, курка тулли вара – унӑн ас-
кӑнлӑхӗн ирсӗрлӗхӗпе тасамарлӑхӗ. [5] Ҫамки ҫине вӑрттӑн пӗлте-
рӗшлӗ ят ҫырса хунӑ: «Ҫӗр ҫинчи аскӑн хӗрарӑмсен, ирсӗрлӗхсен
амӑшӗ – аслӑ хула Вавилон». [6] Эпӗ пӑхрӑм та – ҫак хӗрарӑм сӑ-
ваплисен юнне, Иисус ҫинчен ҫирӗплетсе пӗлтерекенсен юнне
ӗҫнипе ӳсӗррине куртӑм. Ӑна курсассӑн вара тӗлӗнмеллипех тӗ-
лӗнтӗм. [7] «Эсӗ мӗншӗн тӗлӗнетӗн? – тесе ыйтрӗ манран ангел. –
Эпӗ сана ҫак хӗрарӑм тата вӑл утланнӑ ҫичӗ пуҫлӑ та вунӑ мӑйра-
каллӑ тискер кайӑк мӗне пӗлтернине ӑнлантарса парӑп. [8] Ҫак эсӗ
курнӑ тискер кайӑк чӗрӗччӗ, халӗ вӑл вилӗ. Анчах та вӑл тӗпсӗр-
лӗхрен каллех чӗрӗлсе тухӗ те тӗп пулӗ. Ҫӗр ҫинче пурӑнакансен-
чен камсен ятне тӗнче пуҫланнӑранпах пурӑнӑҫ кӗнекине ҫырса
хуман, ҫавсем тискер кайӑка курсан тӗлӗнӗҫ. Мӗншӗн тесен вӑл
чӗрӗччӗ, халӗ вилӗ, унтан каллех чӗрӗлсе тухӗ. [9] Ҫакна ӑнланма
ӑслӑлӑх кирлӗ. Тискер кайӑкӑн ҫичӗ пуҫӗ хӗрарӑм ларакан ҫичӗ
сӑрта [10] тата ҫичӗ патшана пӗлтерет. Ҫиччӗшӗнчен пиллӗкӗшӗ
пӗтнӗ ӗнтӗ, пӗри ҫаплах патшара ларать, юлашки вара ҫӗр ҫине
килмен-ха. Анчах та вӑл, килсессӗн те, нумайлӑха тытӑнса тӑ-
раймӗ. [11] Тахҫан чӗрӗ пулнӑ, халӗ вилӗ тискер кайӑк ҫичӗ пат-
шаран пӗрне, саккӑрмӗшне пӗлтерет. Вӑл та тӗп пулӗ. [12] Эсӗ
курнӑ вунӑ мӑйрака вунӑ патшана пӗлтерет. Хальлӗхе вӗсем
патшана ларайман-ха, анчах та тискер кайӑкпа пӗрле вӗсем пӗр
самантлӑх влаҫра пулса курӗҫ. [13] Вунӑ патшин те пӗр шухӑш.
Вӗсем хӑйсен вӑй-хӑватне, влаҫне тискер кайӑка парас теҫҫӗ.

[14] Вӗсем Путекпе ҫапӑҫӗҫ, анчах та Путек вӗсене ҫӗнтерӗ. Мӗн-
шӗн тесен Вӑл – хуҫасенӗн Хуҫи, патшасенӗн Патши. Унпа пӗр-
ле вара – Хӑй чӗнсе илнисем, суйласа илнисем, шанчӑклисем».

[15] Унтан ангел мана ҫапла каларӗ: «Хайхи эсӗ курнӑ аскӑн хӗ-
рарӑм ларакан юхан шывсем тӗрлӗ чӗлхеллӗ халӑха, тӗрлӗ йӑх-ӑрӑ-
ва пӗлтереҫҫӗ. [16] Эсӗ курнӑ тискер кайӑкӑн вунӑ мӑйраки аскӑн
хӗрарӑма курайми пулӗҫ, ӑна ҫаратса ҫаппа-ҫарамас хӑварӗҫ, ӑна
ҫиййӗҫ, вутра ҫунтарӗҫ. [17] Мӗншӗн тесен Турӑ вунӑ мӑйракана –
ҫав вунӑ патшана – Хӑйӗн ирӗкне тутарӗ: Турӑ сӑмахӗ пурнӑҫ-
ланиччен вӗсен тискер кайӑка пуҫ пулма ирӗк памалла. [18] Эсӗ
курнӑ хӗрарӑм вара ҫӗр ҫинчи патшасемпе хуҫаланакан аслӑ ху-
лана пӗлтерет».

## 18-мӗш сыпӑк

*Вавилон хулине пӗтерни*

[1] Ҫакӑн хыҫҫӑн эпӗ тӳперен анакан тепӗр ангела куртӑм. Ӑна
питӗ пысӑк влаҫ панӑччӗ. Унӑн чап-мухтавӗпе ҫӗр пичӗ те ҫутал-
са кайрӗ. [2] Вара вӑл вӑйлӑ саслӑн кӑшкӑрса каларӗ: «Тӗп пулчӗ
Вавилон! Виҫесӗр аскӑнчӑк тӗп пулчӗ! Вӑл шуйттан кил-ҫурчӗ,
тӗрлӗрен усал сывлӑш пурӑнмалли вырӑн, тӗрлӗрен таса мар та
йӗрӗнмелле вӗҫен кайӑк йӑви пулса тӑчӗ. Мӗншӗн тесен вӑл мӗн
пур халӑхсене ясарлӑхӑн хаяр эрехне ӗҫтерсе ӳсӗртрӗ. [3] Ҫӗр ҫин-
чи патшасем унпа асса пурӑнчӗҫ, унӑн пысӑк пуянлӑхӗпе ҫӗр
ҫинчи купсасем пуйса кайрӗҫ».

[4] Тата эпӗ тӳперен урӑх сасӑ илтрӗм. «Эй, халӑхӑм! – терӗ ҫав
сасӑ. – Ҫак хулан ҫылӑхлӑ ӗҫӗсене хутшӑнмалла ан пултӑр те-
сен, ун ҫине янӑ инкеке тӳсмелле ан пултӑр тесен, унтан тухса
кай! [5] Мӗншӗн тесен ҫак хулан ҫылӑхӗсем тӳпе таранах ҫӗклен-
чӗҫ, унӑн усал ӗҫӗсене Турӑ аса илчӗ ӗнтӗ. [6] Вавилон сире епле
асап кӑтартрӗ, эсир те ӑна ҫаплах тавӑрса парӑр. Ӗҫӗсене кура
ӑна икӗ хут та ытларах тавӑрса парӑр. Хӑвӑра ӗҫтернӗ куркана
эсир ун валли икӗ хут та хаяртарах эрех ярса хатӗрлӗр. [7] Вӑл
мӗн чухлӗ чаплӑланчӗ, пуянлӑхӗпе мӗн чухлӗ киленчӗ, ӑна ҫа-
вӑн чухлӗ асаппа хуйхӑ кӑтартӑр. Мӗншӗн тесен вӑл ҫаплах хӑй
ӑшӗнче: „Эп патшара ларатӑп, эп тӑлӑх арӑм мар, нихҫан та
хурлӑх курмӑп“, – тет. [8] Ҫавӑнпа та пӗр кун хушшинчех ун ҫи-
не тӗрлӗ инкек-синкек – вилӗм, хуйхӑ, выҫлӑх – йӑтӑнса анӗ.

Ăна вутра çунтарса ярĕç, мĕншĕн тесен ăна суд тăвакан Хуçа Турă хăватлă.

[9]Çĕр çинчи патшасем, унпа асса та иртĕхсе пурăннăскерсем,
унăн пушарĕн тĕтĕмне курсассăн, уншăн ӳлесе те татăлса йĕрĕç.
[10]Унăн асапĕсенчен хăранипе аякра тăрса, вĕсем çапла калĕç:
„Эй, аслă хула! Эй, тĕреклĕ Вавилон хули! Хуйхă çитрĕ сана, пысăк хуйхă! Пĕр самантрах санăн судпала айăпланмалла пулчĕ“.
[11]Вара хăйсен таварĕсене никам та илекен пулманран çĕр çинчи
купсасем те ӳлесе, татăлса йĕрĕç. [12]Вĕсен таварĕсем – ылтăн, кĕ-
мĕл, хаклă йышши чулсем, ĕнчĕ, виссонпа порфира*, пурçăнпа
йĕпкĕн хĕрлĕ пир-авăр, ырă шăршăллă йывăç, слон шăмминчен,
паха йывăçран, пăхăртан, тимĕртен, мрамортан тунă япаласем,
[13]корицăпа фимиам, мирăпа ладан, хĕрлĕ эрехпе олив çăвĕ, çă-
нăх, тулă, выльăх-чĕрлĕх, сурăхсем, лашасемпе кӳмеллĕ урапа-
сем, чурасем – никама та кирлĕ пулмĕç. [14]Ĕнтĕ санăн кăмăллană
çимĕçӳсем те çук, пуянлăхупа чаплă капăрлăху та пĕтрĕ, вĕсене
эсĕ тек нихăçан та каялла тавăраймăн. [15]Çак тĕрлĕ тавара Вави-
лонра сутса пуйнисем унăн асапĕсенчен хăранипе аякра тăрса,
ӳлесе те татăлса йĕрсе, [16]çапла калĕç: „Эй, аслă хула! Хуйхă çит-
рĕ сана, пысăк хуйхă! Эсĕ виссонпа порфира, хĕрлĕ хăмач тум-
тир тăхăнаттăн, ылтăнпа тата хаклă йышши чулсемпе, ĕнчĕпе
капăрланаттăн! [17]Акă ĕнтĕ, пĕр самантрах çав тĕрлĕ пуянлăху
пĕтмелле пулчĕ! Карап капитанĕсем, караппа çӳрекенсем, мо-
ряксем, тинĕс ĕçченĕсем – пурте карапĕсемпе хуларан аякра ча-
рăнса тăчĕç. [18]Пушар тĕтĕмне курсассăн вара вĕсем кăшкăрса
ячĕç: «Çак аслă хулапа танлашма пултараканни урăх пур-и?!»
[19]Хăйсем хулашăн хурланнине палăртса, ӳлесе йĕре-йĕре вĕсем
çапла каларĕç: «Эй, аслă хула! Хуйхă çитрĕ сана, пысăк хуйхă!
Караплă çынсем сан мулна пула пуйнăччĕ. Акă ĕнтĕ, пĕр саман-
трах эсĕ çука юлтăн!» [20]Эй, тӳпе! Эй, мĕн пур сăваплă апостол-
семпе пророксем! Çак хулана эсир тăвас тенĕ суда Турă тунăшăн
савăнса хĕпĕртĕр!

[21]Унтан пĕр хăватлă ангел арман чулĕ пек чул илчĕ те ăна
тинĕсе ывăтрĕ. «Аслă Вавилон хулин те çакнашкалах пĕтмелле
пулĕ, унăн çĕр питĕнчен çухалмалла, – терĕ вăл. [22]– Кунта текех

---

* 18:12 *Виссон* – паха йĕтĕн пир е çав пиртен çĕленĕ тумтир. *Порфира* – тĕксĕм хĕрлĕ хăмач пир е çав пиртен çĕленĕ тумтир.

кёсле калани те, юрлани те, шăхлич калани те, труба сасси те
илтĕнмĕ. Кунта текех ăстасем те, ал ĕçĕ тăвакансем те пулмĕç.
Кунта текех ал арманĕ сасси те илтĕнмĕ. 23 Кунта текех çутаткăç
та çунмĕ, хĕрпе каччă сасси те янăрамĕ. Сан купсусем çĕр çинче
чаплăран та чаплă хуçасемччĕ, санăн асамлăхупа мĕн пур халăх
улталаннăччĕ. 24 Анчах та çак хула çылăхĕсене пула сăваплисемпе
пророксен, çĕр çинче вĕлернисен пурин те – юнĕ юхнă!»

## 19-мĕш сыпăк

*Вавилона суд тунăшăн Турра мухтани*

1 Çакăн хыççăн эпĕ тӳпере йышлă халăх сасси пек вăйлă сасă-
сем илтрĕм. «Аллилуия! – тесе кăшкăрчĕç вĕсем. – Çăлăнăçпа
мухтав та, чыспала хăват та пирĕн Хуçамăрта. 2 Мĕншĕн тесен
Унăн сучĕ тӳрĕлĕхлĕ те чăн. Çав виçесĕр аскăнчăка, пĕтĕм çĕре
астарса яракана, Турă суд туса айăпларĕ, Хăйĕн чурисен юнĕшĕн
тавăрчĕ». 3 «Аллилуия! – терĕç тепĕр хут. – Унăн тĕтĕмĕ ĕмĕр-ĕмĕ-
рех тӳпене çĕкленет!» 4 Унтан çирĕм тăвата ватăпа тăвата чĕр чун
престол çинче ларакан Турра: «Аминь! Аллилуия!» – тесе çĕре
ӳксе пуççапрĕç.

*Путекĕн туйĕ*

5 Вара престол патĕнчен çапла калакан сасă илтĕнчĕ: «Эй,
Туррăн мĕн пур чурисем, мĕн пур Унран хăракансем, асли те,
кĕçĕнни те – Турра мухтăр!» 6 Каллех эпĕ йышлă халăх сасси пек
сасă илтрĕм. Çав сасă шыв кĕрлени пек, вăйлă аслати сасси
пек каларĕ: «Аллилуия! Пурне те тытса тăракан Хуçа Туррăмăр
патшана ларчĕ! 7 Ĕнтĕ савăнса хĕпĕртер те Ăна мухтар, мĕншĕн
тесен Путекĕн туйĕ çитрĕ. Ĕнтĕ çураçнă хĕрĕ те капăрланса ха-
тĕрленчĕ. 8 Ăна таса та шурă виссон тăхăнтартрĕç. Виссон тумтир
вара сăваплисен тӳрĕлĕхне пĕлтерет».

9 Унтан ангел мана: «Путекĕн туйне чĕннисем телейлĕ», – тесе
çырма хушрĕ. Тата вăл мана çапла каларĕ: «Ку сăмахсем – Тур-
рăн чăн сăмахĕсем». 10 Вара эпĕ ун ури умне ӳксе пуççапрăм, ан-
чах та вăл мана: «Асту, кунашкал ан хăтлан, – терĕ. – Эпĕ сан
пекех, Иисус çинчен çирĕплетсе пĕлтерекен тăванусем пекех,
Турă чури кăна. Турра пуççап! Мĕншĕн тесен Иисус çинчен çи-
рĕплетсе пĕлтерни – пророкла каланин тĕшши пулса тăрать».

*Шурă ут çинчи юланутçă*

11 Унтан эпĕ пăхрăм та тӳпе уçăлса кайнине тата шурă юланута
куртăм. Тӳрĕ суд тунăран, çĕнтерӳллĕ пулнăран юланутçине
Шанчăкли тата Чăнни теççĕ. 12 Куçĕсем Унăн вут çулăмĕ пек, пу-
çĕ çинче темĕн чухлĕ пуç кăшăлĕсем. Çавсем çине Унăн ятне
çырнă, Хăйĕнсĕр пуçне вăл ята никам та пĕлмест. 13 Вăл юнпа
хĕрелнĕ тумтир тăхăннăччĕ. Унăн ячĕ – Турă Сăмахĕ. 14 Тӳпери
йышлă çар ун хыççăн шурă утсем çинче пырать, хăйсем таса та
шурă виссон тумланнă. 15 Унăн чĕлхи-çăварĕнчен çивĕч хĕç тухса
тăрать. Çав хĕçпе Вăл халăхсене çĕнтерĕ. Вĕсене Вăл тимĕр туяпа
пăхĕ. Вăл Пурне те тытса тăракан Турă çиллин эрехне юхтаркăч-
ра таптаса кăларĕ. 16 Тумтирĕпе пĕççи çине ят çырса хунă: пат-
шасен Патши, хуçасен Хуçи.

17-18 Унтан эпĕ хĕвел çинче тăракан пĕр ангела куртăм. Çӳл
тӳпере вĕçекен кайăксене вăл вăйлă саслăн çапла каларĕ: «Вĕçĕр,
вĕçĕр! Патшасен, хуçасен, çар пуçĕсен, утсемпе юланутçăсен
виллисене, ирĕклисемпе чурасен виллисене, аслисемпе кĕçĕн-
нисен виллисене сăхмашкăн Туррăн аслă каçхи апатне пуçтарă-
нăр!» 19 Вара эпĕ тискер кайăкпа çĕр çинчи патшасене тата вĕ-
сен çарне куртăм. Вĕсене ут çинче Лараканпа тата Унăн çарĕпе
çапăçмашкăн пуçтарнă. 20 Анчах та тискер кайăка тата ун умĕн-
че тĕлĕнмелле паллăсем кăтартакан суя пророка ярса тытрĕç.
Çав тĕлĕнмелле ĕçсене кăтартса вăл тискер кайăкăн çыру палли-
не ларттаракансене, тискер кайăк сăнарне пуççапакансене илĕр-
тсе улталанă. Вара тискер кайăкпа суя пророка иккĕшне те кӳ-
кĕрт çунакан вутлă кӳлле чĕрĕллех пăрахрĕç. 21 Ыттисен вара,
вĕсен çарĕнчисен, ут çинче Лараканăн чĕлхи-çăварĕнчи хĕçпе
пĕтмелле пулчĕ. Мĕн пур вĕçен кайăк вĕсен виллисене тăранич-
ченех сăхрĕ.

## 20-мĕш сыпăк

*Пин çул*

1 Унтан эпĕ тӳперен анакан ангела куртăм. Унăн аллинче тĕп-
сĕрлĕх çăраççипе пысăк сăнчăрччĕ. 2 Вăл хайхи аçтахана, авал-
хи çĕлене, ярса илчĕ те пин çуллăха сăнчăрласа лартрĕ, çак çĕ-
лен – шуйттан, сатана. 3 Пин çул иртмесĕр те шуйттан халăхсене

илёртсе ан улталатăр тесе, ангел ăна тĕпсĕрлĕхе пăрахрĕ. Вара
питĕрсе илчĕ те пичет лартрĕ. Пин çул иртсессĕн ăна самантлăха
ирĕке кăлармалла.
[4] Унтан эпĕ престолсене тата вĕсем çинче ларакансене куртăм.
Вĕсене суд тума ирĕк панă. Эпĕ тата Иисус çинчен, Турă сăмахĕ
çинчен çирĕплетсе пĕлтернĕшĕн пуçĕсене каснă çынсен чунĕсе-
не куртăм. Вĕсем тискер кайăка та, унăн сăнарне те пуççапман;
çамкисемпе аллисем çине çыру палли ларттарман. Вĕсем, чĕрĕл-
се тăрса, Христоспа пĕрле пин çул патшара ларчĕç. [5] Вилнисен-
чен ыттисем вара пин çул иртмесĕр те чĕрĕлсе тăмарĕç. Çакă
малтанхи хут чĕрĕлсе тăни пулчĕ. [6] Малтанхи хутĕнчех вилĕмрен
чĕрĕлсе тăма тивĕç пулнисем телейлĕ те сăваплă. Иккĕмĕш ви-
лĕм вĕсемпе пуç пулаймĕ. Вĕсем, Турăпа Христосăн священни-
кĕсем пулса, Унпа пĕрле пин çул патшара ларĕç.

*Шуйттана тĕп туни*

[7] Кайран, пин çул иртсессĕн, шуйттана тĕрминчен кăларĕç.
Вăл тĕнчен тăватă кĕтессинчи халăхсене, Гог тата Магог текенс-
керсене, илĕртсе улталаса çӳрĕ, вĕсене вăрçа хатĕрленмешкĕн
пĕр çĕре пуçтарĕ. Вĕсен шучĕ – тинĕс çыранĕнчи хăйăр пĕрчи-
сем чухлех. [8] Акă вĕсем, пĕтĕм çĕр тăрăх тухса, сăваплисем тăра-
кан вырăна, Турă юратакан хулана, çавăрса илчĕç. [9] Анчах та
тӳперен, Турă патĕнчен, вут анчĕ те вĕсене çунтарса ячĕ. [10] Вĕсе-
не илĕртсе улталанă шуйттана вара кӳкĕрт çунакан вутлă кӳлле,
тискер кайăкпа суя пророка пăрахнă çĕрех, ывăтрĕç. Вĕсене ку-
нĕн-çĕрĕн, ĕмĕр-ĕмĕрех асаплантарĕç.

*Суд*

[11] Унтан эпĕ пысăк шурă престол тата ун çинче Ларакана кур-
тăм. Вăл пуртан çĕрпе пĕлĕт те çухалчĕ: вĕсем валли вырăн юл-
марĕ. [12] Вара эпĕ вилнисем, аслисемпе кĕçĕннисем те, Турă умĕн-
че тăнине куртăм. Çавăнтах уçса хунă кĕнекесем пурччĕ. Пурă-
нăç кĕнеки те уçăччĕ. Вара вилнисене кĕнекесенче çырнине
кура, кашнинех харпăр-хăй ĕçне кура, суд турĕç. [13] Тинĕс хăй
ăшĕнчи вилнисене пачĕ, вилĕмпе тамăк та вилнисене пачĕç,
кашнинех ĕçĕсене кура суд турĕç. [14] Вара вилĕмпе тамăка вутлă
кӳлле пăрахрĕç. Çакă иккĕмĕш вилĕм пулчĕ. [15] Камăн ятне пурă-
нăç кĕнекине çырса хуман, çавна вутлă кӳлле пăрахрĕç.

## 21-мӗш сыпӑк

*Ҫӗнӗ тӳпепе ҫӗнӗ ҫӗр*

1 Унтан эпӗ ҫӗнӗ тӳпепе ҫӗнӗ ҫӗре куртӑм, мӗншӗн тесен ӗлӗк-
хи тӳпепе ҫӗр те, тинӗс те ҫукчӗ ӗнтӗ. 2 Вара эпӗ, Иоанн, сӑваплӑ
хулана – ҫӗнӗ Иерусалима – куртӑм. Вӑл ҫӳлтен, Турӑ патӗнчен
анатчӗ. Хӑйне, ҫураҫнӑ хӗре пулас упӑшки валли тирпейлесе тум-
лантарнӑ пек, хатӗрленӗ. 3 Ҫав самантрах тӳперен ҫапла калакан
вӑйлӑ сасӑ илтрӗм: «Акӑ, Туррӑн ҫынсем хушшинче пурӑнмалли
чатӑрӗ. Малашне Вӑл ҫынсемпе пурӑнӗ, вӗсем Унӑн халӑхӗ пу-
лӗҫ, Вӑл вара вӗсен Турри пулӗ. 4 Турӑ вӗсен куҫӗнчи кирек епле
куҫҫульне те шӑлса ярӗ. Текех ӗнтӗ вилӗм те, йӗрӳ-макӑру та,
чир-чӗр те пулмӗ, мӗншӗн тесен ӗлӗкхи йӑлтах иртсе кайнӑ».

5 Вара престол ҫинче Ларакан: «Акӑ, пӗтӗмпех ҫӗнни пултара-
тӑп!» – терӗ. Унтан Вӑл мана: «Ҫак сӑмахсем тӗрӗс те чӑн, ҫавӑн-
па та вӗсене ҫырса хур!» – терӗ. 6 «Мӗн пулмалли пулчӗ! – терӗ
Вӑл мана. – Эпӗ – Альфа тата Омега, пуҫламӑшӗ тата вӗҫӗ.
Камӑн ӑшӗ хыпнӑ, ҫавна чӗрӗлӗх ҫӑлкуҫӗнчен ахалех ӗҫтерӗп.
7 Ҫӗнтерекен пӗтӗмпех еткерлӗхе илӗ, вара Эпӗ унӑн Турри пу-
лӑп, вӑл Манӑн ывӑлӑм пулӗ. 8 Анчах та хӑракансем те, шанчӑк-
сӑррисем те, ирсӗрсем те, ҫын вӗлерекенсем те, аскӑнсем те,
асамҫӑсем те, кӗлеткесене пуҫҫапакансемпе мӗн пур суеҫ тавра-
шӗ те хӑйсен вырӑнне кӳкӗрт ҫунакан вутлӑ кӳлӗре тупӗҫ. Ку –
иккӗмӗш вилӗм».

*Ҫӗнӗ Иерусалим*

9 Унтан ман патӑма юлашки ҫичӗ инкекпе тултарнӑ ҫичӗ кур-
каллӑ ангелсенчен пӗри пычӗ те ҫапла каларӗ: «Кил, эпӗ сана
Путекӗн ҫураҫнӑ хӗрне, ҫамрӑк арӑмне, кӑтартатӑп». 10 Вара вӑл
мана Святой Сывлӑш витӗмӗпе пысӑк та ҫӳллӗ ту ҫине илсе кай-
рӗ. Ту тӑрринчен вӑл мана ҫӳл тӳперен, Турӑ патӗнчен анакан
сӑваплӑ Иерусалим хулине кӑтартрӗ. 11 Ҫак хулан Турӑ мухтавӗ
пур. Вӑл хаклӑ йышши чул пек, витӗр таса пӑр евӗрлӗ яспис
пек йӑлтӑртатса тӑратчӗ. 12 Хули тавра вун икӗ хапхаллӑ пысӑк та
ҫӳллӗ хӳме. Хапхасем ҫинче – вун икӗ ангел, кашни хапхи ҫинех
Израилӗн вун икӗ йӑхӗн ятне ҫырнӑ. 13 Виҫӗ хапхи – хӗвел тухӑҫ
енне, виҫӗ хапхи – ҫурҫӗр енне, виҫӗ хапхи – кӑнтӑр енне, тепӗр

виçĕ хапхи хĕвел анăç енне тухать. 14 Хула хӳмисене вун икĕ ни-
кĕс çине туса лартнă, кашни никĕсĕ çинех Путекĕн вун икĕ
апостолĕн ятне çырнă.

15 Манпа калаçакан ангелăн хулапа хапхисене, хӳмине виç-
мешкĕн ылтăн туя пурччĕ. 16 Хули тăваткĕтеслĕх евĕр, унăн ур-
лăш-тăршшĕ пĕрех. Ангел хулана туйипе виçсе тухрĕ те, пурĕ
вун икĕ пин çурă çухрăма яхăн пулчĕ. Унăн тăршшĕ те, сарлакă-
шĕ те, çӳллĕшĕ те пĕрешкелех. 17 Унтан ангел хула хӳмине этем
виçипе виçрĕ те, пурĕ çĕр хĕрĕх тăвата чике пулчĕ. Ангел виçи
этем виçи пекехчĕ. 18 Хӳмине ясписран купаланă, хулине вара –
витĕр курăнакан кĕленче пек таса ылтăнран. 19 Хӳме никĕсĕсене
тĕрлĕ хаклă йышши чулсемпе илемлетнĕ. Пĕрремĕш никĕсĕ –
яспис, иккĕмĕшĕ – сапфир, виççĕмĕшĕ – халкидон, тăваттăмĕ-
шĕ – смарагд, 20 пиллĕкмĕшĕ – сардоникс, улттăмĕшĕ – сердо-
лик, çиччĕмĕшĕ – хризолит, саккăрмĕшĕ – вирилл, тăххăрмĕ-
шĕ – топаз, вуннăмĕшĕ – хризопрас, вун пĕрмĕшĕ – гиацинт,
вун иккĕмĕшĕ аметист текен чул. 21 Вун икĕ хапхи – вун икĕ
ĕнчĕ. Кашни хапхине пĕр ĕнчĕрен тунă. Хула урамĕ – витĕр
курăнакан кĕленче пек таса ылтăнран.

22 Хулара эпĕ Турă Çуртне курмарăм, мĕншĕн тесен çак хула-
шăн Турă Çурчĕ – Пурне те тытса тăракан Хуçа Турăпа Путек.
23 Хулана çутатмашкăн хĕвел те, уйăх та кирлĕ мар, мĕншĕн тесен
ăна Турă мухтавĕ çутатать, унăн çутаткăçĕ – Путек. 24 Çăлăннă
халăхсем çак çутăра çӳрĕç, патшасем хăйсен çĕр çинчи мухтавĕпе
чапне унта илсе пырĕç. 25 Хула хапхисене кăнтăрла питĕрмĕç, каç
вара унта пулмасть. 26 Халăхсем унта мухтавĕпе чапне илсе пы-
рĕç. 27 Хулана таса марри нимĕн те кĕреймĕ, ирсĕрлĕхпе суялăха
парăннисем те нихăшĕ те кĕреймĕç. Путекĕн пурăнăç кĕнекине
çырса хунисем кăна унта кĕрейĕç.

## 22-мĕш сыпăк

*Чĕрĕлĕх шывĕ*

1 Унтан вара ангел мана чĕрĕлĕх шывĕн юхан шывне кăтартрĕ.
Юхан шывĕ, Турăпа Путек престолĕ патĕнчен юхса тухса, витĕр
курăнакан пăр пек йăлтăртатать. 2 Малалла çав юхан шыв хула
витĕр юхать. Шыв икĕ енĕпе те пурăнăç йывăççисем ӳсеççĕ. Çул-
талăкра вĕсем вун икĕ хут çимĕç параççĕ. Кашни йывăççи уйăхра

пĕрре çимĕç парать, йывăç çулçисем – халăхсене сиплемешкĕн.
3 Хулара ĕнтĕ тек ылханли нимĕн те пулмĕ. Унта Турăпа Путекĕн
престолĕ ларĕ, Унăн чурисем Ăна пуççапса пурăнĕç. 4 Вара вĕ-
сем Унăн сăнне курĕç, çамкисем çинче Унăн ячĕ пулĕ. 5 Унта ĕн-
тĕ каç та пулмĕ, хĕвел çути те, çутаткăç çути те кирлĕ пулмĕ,
мĕншĕн тесен Хуçа Турă вĕсене çутатĕ. Вĕсем, патшасем пек,
ĕмĕр-ĕмĕр хуçаланĕç.

*Христос килесси*

6 Унтан мана ангел: «Çак сăмахсем тĕрĕс те чăн. Малашлăхра
часах мĕн пулассине Хăйĕн чурисене пĕлтермешкĕн сăваплă
пророксен Хуçа Турри Хăйĕн ангелне ячĕ», – терĕ. 7 «Акă, Эпĕ
часах пырăп. Çак кĕнекери пророкла сăмахсене тытса пурăнакан
телейлĕ!» 8 Эпĕ, Иоанн, çакна йăлтах куртăм та, илтрĕм те. Вара,
курнă-илтнĕ хыççăн, хама çакна йăлтах кăтартакан ангела пуç-
çапмашкăн ун ури умне ӳкрĕм. 9 Анчах та вăл мана: «Асту, ку-
нашкал ан хăтлан, – терĕ. – Эпĕ сан пекех, санăн пророк тăва-
нусем пекех, çак кĕнекери сăмахсене тытса пыракансем пекех,
Турă чури кăна. Турра пуççап!» 10 Тата вăл мана: «Çак кĕнекери
пророкла сăмахсене пытарса, пичет хурса ан усра, мĕншĕн тесен
вăхăт çывăх ĕнтĕ, – терĕ. 11 – Тӳрĕ мар çын усал тусах пурăнтăр,
ирсĕрри татах ирсĕрлентĕр. Тӳрĕ çын ырă тусах пурăнтăр, сăвап-
ли тата сăваплăрах пултăр».

12 «Акă, Эпĕ часах пырăп. Кашнинех харпăр-хăй ĕçĕшĕн тавăр-
са памашкăн тавăрăвăм Хампа пĕрлех. 13 Эпĕ – Альфа тата Оме-
га, пуçламăшĕ тата вĕçĕ, Малтанхи тата Кайранхи».

14 Унăн пил-хушăвĕсене тытса пыракансем телейлĕ. Пурăнăç
йывăççи те вĕсемшĕн пулĕ, хулана хапхаран кĕме те вĕсем тивĕç-
лĕ пулĕç. 15 Усал йытăсемпе тухатмăшсем, аскăнсемпе çын вĕле-
рекенсем, кĕлеткесене пуççапакансем, тĕрĕсмарлăха юратса тĕ-
рĕс мар пурăнакансем вара тулашĕнче юлĕç.

16 «Эпĕ, Иисус, сире çакна чиркӳсенче çирĕплетсе пĕлтермеш-
кĕн Хамăн ангелăма ятăм. Эпĕ – Давид ăрăвĕн никĕсĕ тата тăхă-
мĕ, ирхи çутă çăлтăр». 17 «Килсем!» – теççĕ Сывлăш та, Путекĕн
çураçнă хĕрĕ те. «Килсем!» – тетĕр çакна итлекенĕ те. Ăш хыпни
те, кăмăл тăваканни те килсе чĕрĕлĕх шывне ахалех илтĕр.

18 Çак кĕнекери пророкла сăмахсене итлекен кашни çыннах
эпĕ те çирĕплетсе калатăп: кам та кам çак сăмахсем çумне

урăххи хушать, Турă ун çине çак кĕнекере çырса кăтартнă ин-
кексене ярать. 19 Кам та кам çак кĕнекери пророкла сăмах-
сенчен хăшне те пулин кăларса пăрахать, Турă ăна пурăнăç кĕ-
некине те, сăваплă хулана та — вĕсем пирки çак кĕнекере çыр-
нă — кĕртмĕ.

20 Çакăн çинчен çирĕплетсе Пĕлтерекен калать: «Ĕнтĕ часах
пырăп!» Аминь. Килсемччĕ, Иисус Хуçамăр!

21 Сире пурсăра та Иисус Христос Хуçамăрăн тивлечĕ пултăр.
Аминь.